24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
СЕНТЯБРЬ
9
ЫТЛАРИКУН
212 (5927) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тенчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Вăтам шкулăн аслăрах класĕсенче çарпа физкультура ĕçне вĕрентесси

Отечественнăй аслă вăрçă пынă тапăрта вăтам шкулăн аслăрах классĕсенче вĕренекен ачасене çарпа физкультура ĕçне вĕрентсе хатĕрлесси, кĕçĕнрех классенче вĕренекенсене ку енĕпе малтанхи хăнăхусем парасси питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Пирĕн совет саманинче ӳссе аталанса пыракан çамрăк ăруран Хĕрлĕ Çар валли пысăк ăстăнлă, çирĕп шăмшаклă, хăюллă та паттăр боецсем—тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн парăннă, тăван халăх чыслăхĕпе ирĕклĕхĕн тăшмана хирĕç юлашки кон тумламĕ юлмиччен çапăçма пултаракан çулăмлă патриотсем пăхса ситĕнтермелле.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Потемкин юлташ аслăрах классенче вĕренекен ачасене çарпа физкультура ĕçне вĕрентсе хатĕрлесси çинчен кăçалхи августăн 15-мĕшĕнче ятарласа приказ кăларнă. Çарпа физкультура ĕçне вĕрентме 1941—42 вĕренӳ çулĕнче 8-мĕш классенче эрнере пĕр сехет вырăнне 3 сехете яхăн, 9-мĕш классенче икĕ сехет вырăнне—4 сехете яхăн, 10-мĕш классенче икĕ сехет вырăнне—5 сехете яхăн уйăрса памалла. Çакă вăл çарпа физкультура ĕçне вĕрентессине вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек йĕркеleме пысăк майсем парать.

Республикăри вăтам шкулсем те пурте тенĕ пекех çак ĕçе вĕренӳ çулĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах тытăнчĕç. Çапла, Ишлей районĕнчи вăтам шкулсенче, фронта кайнă военруксем вырăнне, çĕнĕ военруксем уйăрса çирĕплетнĕ. Тивĕçпе Ишек вăтам шкулĕсенче çарпа физкультура ĕçне вĕренмелли городоксем тунă, тивĕçлĕ инвентарьсем çителĕклĕ туяннă. Шкулсенчи 5—7-мĕш классенче физкультурăна вĕрентес ĕçе старший пионервожатăйсем çине хунă. Сентябрь уйăхĕн вăтаçĕрĕнче районри çутĕç пайĕ военруксемпе физкультура преподавателĕсен саминарне туса ирттерет. Семинарта çарпа физкультура ĕçне вĕренмелли программа пуличчен усă курма хатĕрленĕ конспектсене пăхса тухаççĕ.

Шкулсем валли военруксем тупас ыйту кăçалхи вĕренӳ çулĕнче питех те çивчĕ ыйту пулса тăрать. Ку тĕлĕшпе уйăм районсенче учительсен коллективĕсем паха пуçарулăх кăтартаççĕ. Сăмахран, Октябрьски районра çарпа физкультура тата çарпа санитари ĕçĕсен уйăм разделĕсем тăрăх вĕрентме хими, биологи тата ытти дисциплинăсен преподавателĕсене хушаççĕ.

ПВХО ĕçне вĕрентме аслăрах классенчи ачасенчен инструкторсем уйăраççĕ. Совет çыннисене тивĕçлĕ пуçарулăхпа тата тавçăрулăхпа ĕçлесен, пирĕн пĕр шкул та военруксăр пулас çук, эпир çак питех те паха предмета вĕрентес ĕçе тивĕçлипех лайăхăн йĕркеleме пултарăпăр.

Çарпа физкультура ĕçне кăçалхи вĕренӳ çулĕнче арçын ачасене тата хĕрачасене уйăмăн вĕрентсе хатĕрлемелле тунă. Çакă вăл иртнĕ çулсенче пулнă çитменлĕхсене пĕтерме май парать. Кунта чи малтан арçын ачасемпе хĕрачасен вăрçă ĕçĕнчи пулас выраннăсене, вĕсен умне тухса тăракан çар задачисен уйăмлăхĕсене шута илнĕ. Арçын ачасене пирĕн—Хĕрлĕ Çар боецĕсем пулма, хĕрачасене—медицина сестрисем пулма малтанхи практикăллă хăнăхусем памалла. Çавăнпа та арçын ачасем çар ĕçне, вăрçă ĕçне вĕренеççĕ пулсан, хĕрачасен çарпа санитари ĕçне вĕренмелле. Çар ыйтăвĕсем хунта, паллах, пуринпĕн те физкультура ыйтăвĕсемпе таччăн сыхăнса пымалла.

Физкультура урокĕсенче ачасем пысăк мар япала çĕклемĕсемпе инçе çула çуран утма, çул çинче йывăрлăхсем пур вырăнсене чупса каçма, чупса пынă чухне чăрмавсем урлă сиксе каçма, шуса е урăхла майсемпе каçма, йĕлтĕрпе кирек мĕнле вырăнта та çӳреме, гранатăна инçете тата тӳрĕ ывăтма, шыв урлă инçете тата хăвăрт ишсе каçма, чылай сулăмлă япаласем çĕклеме тата туртма, штыкпа тăрса çапăçма çирĕп хăнăхусем илме тивĕç.

Тĕп çар ĕçне вĕрентсе хатĕрленĕ çĕрте ачасене пăшалтан тĕрĕс пеме, стройпа утма, топографи тата тактика ыйтăвĕсене лайăх тавçăрса илме, чирлисемпе аманнисене малтанхи пулăшу пама, сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланас ĕçе йĕркеleме практикăллă хăнăхусем памалла. Паллах, кунта пирĕн Хĕрлĕ Çара мĕнле организацилени тата Хĕрлĕ Çарăн уставĕсене вĕрентесси тĕп вырăн йышăнса тăма тивĕç.

Çарпа физкультура тата çарпа санитари предмечĕсем, шкулти ытти предметсем пекех, çĕршыври общественнăй-политикăллă ыйтусемпе таччăн сыхăнса пымалла. Çĕршывăмăр сене ирĕклĕхпе телейлĕ пурнăç туса панă аслă Совет Союзĕ социализмлă çĕршыв пулса тăнине, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар социализм çитĕнĕвĕсене фашистла тискер-кайăксенчен хӳтленине, пирĕн тăван çĕршыв умне халĕ пысăк хăрушлăх тухса тăнине, çав хăрушлăха сирсе яма пĕтĕм совет халăхĕ çĕкленнине тата халĕ эпир туса пыракан отечественнăй вăрçă вăл мĕнпур халăхсене фашистла пусмăртан хăтармалли вăрçă пулса тăнине кашни совет ачин çирĕппĕн ăнланса илмелле.

Паллах, çак ыйтусене ăнлантарса пама урокри вăхăт хăна çителĕксĕр. Çавăнпа та РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ çар ĕçне вĕренмелли программăн—«Хĕрлĕ Çар тата Тинĕс-Çар Флочĕ фашизма хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçăра» ятлă разделĕ тăрăх урок тулашĕнче эрнере пĕрре уйăм заняти туса ирттерме кăтартса панă. Вĕренекенсене кунта Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн фронтри паттăрла ĕçĕсемпе. Гастелло, Жуков, Здоровцев, Харитонов, Талалихин пек чаплă соколсен тĕлĕнмелле геройлăх примерĕсемпе паллаштармалла.

Шкул ачисене çарпа физкультура ĕçне вĕрентсе хатĕрлесси вăл военруксемпе физкультура преподаветелĕсен ĕçĕ кăна мар. Халăхи вăхăтра шкулти мĕнпур дисциплинăсене оборона ыйтăвĕсемпе, совет халăхĕн кулленхи практикăллă ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса пымалла.

Çавăн пекех, пирĕн совет ачисем мĕн пĕчĕкрен пуçласах çар тата вăрçă ĕçĕсемпе питех те интереслеппине шута илсе, кĕçĕн классенче те çак енпе воспитани ĕçне лайăх йĕркелемелле, ачасен класс тулашĕнчи вăхăчĕпе туллин усă курмалла. Вĕсене масăллă оборона кружокĕсене, сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланас ĕçе явăçтармалла, ачасен çар вăййисене организацилемелле. ССР Союзĕн Совнаркомĕ кăтартса панă пек, пирĕн «çул ситменнисене, 8 султан пуçласа 16 çула çитмен ачасене, сывлăшран килсе тапăннă чух уйăмăн сыхланмалли средствăсемпе усă курма вĕрентмелле». Ачасен пуçарулăхĕпе хастарлăхĕ пысăк, вĕсене организацилесе пыма пĕлни кăна кирлĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче колхоз çуртйĕрĕсемпе тырпулне сыхлама постсем тунă ачасем, халĕ хăйсен шкул çурчĕсене сывлăшран килсе тапăннинчен, пушарсенчен сыхлас ĕçе вĕсем хавасласа туса пырĕç.

Çарпа физкультура ĕçне вĕренес тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсене шкул ачисен БГТО, ГТО, ГСО тата ПВХО нормисене панипе çирĕплетсе пымалла. Чылай шкулсенче çак ĕçе çуллахи вăхăтра та туса пынă, халĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă май вăл татах та ытларах вăйланмалла. Сăмахран, Мăн-Сĕнтĕр вăтам шкулĕнче аслăрах классенче вĕренекен 16 çултан иртнĕ ачасем пурте ПВХО инструкторĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем мĕнпур шкул ачисене çар ĕçне вĕрентес ĕçе явăçтараççĕ.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче 10-мĕш класран вĕренсе тухакан арçын ачасем çитес çул пурте пекех призыва тăраççĕ, çарпа санитари ĕçне лайăх хатĕрленсе çитнĕ хĕрачасем медицина сестрисем пулса ĕçлеме пултараççĕ. Çавăнпа та 10-мĕш классемпе уйăмах çине тăрса ĕçлемелле, килес çулхи призыва лайăх хатĕрленсе кĕтсе илмелле.

Шкулсенчи Осоавиахим организацийĕсем халĕ хăйсен ĕçне, шкулсем умĕнче тăракан çĕнĕ задачăсене кура, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ йĕркесемпе урăхлатса çĕнетме тивĕç. Шкулти Осоавиахим организацийĕн халĕ ачасем хушшинчи çарпа физкультура ĕçне хăватлантарса пыракан тĕп вучах пулса тăмалла.

Çарпа физкультура ĕçне вĕренесси çирĕп пулса пытăр тесен, вĕренекенсене пур тĕрлĕ инвентарьсем—вĕренмелли пăшалсем, гранатăсем, противогазсем, йĕлтĕрсем тата ытти тĕрлĕ япаласем тупса памалла. Мĕнпур шкулсенче физкультура площадкисем, городоксем тумалла.

Партиле комсомолăн тата Осоавиахимăн вырăнти организацийĕсем шкулсене çарпа физкультура ĕçĕнче кулленех парктикăллă пулăшу парса пыма тивĕç.

Шкулти пĕтĕм вĕрентӳпе воспитани ĕçне, уйăмах çарпа физкультура ĕçне вĕренессине тăван çĕршыв ыйтнă пек, халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ ыйтнă пек вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ йĕркепе урăхлатса çĕнетсе, эпир Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ валли хăюллă та паттăр боецсем пиншерĕн те миллионшăн хатĕрлесе кăларăпăр.

*ТАСС опровержений*ĕ

Германи хаçачĕсем тата Германири радио, совет войскисем Иранăн хăйсем ыйтнă районĕсенче вырăнти советсем туса хураççĕ тесе калакан пĕлтерӳсем сараççĕ.

ТАСС-а çак пĕлтерӳсем тĕрĕс марри çинчен пĕлтерме полномочи панă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 6-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника кирĕç çапăçусем туса пынă.

Пирĕн авиаци çапăçу хирĕсенче противникăн мотомехчаçĕсене, пехотине тата артиллерине вăйлăн пыра-пыра çаннă тата унăн аэродромĕсенчи авиацине пĕтерсе пынă.

Тĕплĕн шута илнĕ тăрăх, сентябрĕн 3-мĕшĕнче немĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 33 самолет мар, 56 самолет пĕтернĕ.

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата пуринчен ытларах противникăн аэродромĕсем çинче немĕçсен 61 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

* * *

Совет артиллерисчĕсем немĕçсен фашистла войскисене хирĕç геройла çапăçаççĕ. Пирĕн орудисенчен тĕл персе тивретнипе Германин пиншер салтакĕсем вилеççĕ, çĕршер танкĕсем, бронемашинисемпе автомобилĕсем, артиллерин, миномĕтсен тата пулеметсен вуншар батарейисем пĕтеççĕ. Пирĕн войскăсем сентябрĕн 4-мĕшĕнче пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынине пурте пĕлетпĕр. Çак кун совет артиллерисчĕсем немĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 15.000 çынран кая мар вĕлернĕ, тĕрлĕрен калибрлă орудисем 100 ытла, пулеметсен 34 йăвине, миномĕтсен 48 батарейине, 18 понтоннăй кĕпере тата переправăсене, 940 автомобиле тата танксемпе бронемашинăсене 180 çити пĕтерсе тăкнă.

Немĕç тата финн фашисчĕсене хирĕç Мезенцев лейтенантăн батарейинчи боецсем хăйсене шеллемесĕр паттăрăн çапăçаççĕ. Çак кунсенче Мезенцев юлташăн батарейи немĕçсен пысăк автоколоннине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Противникăн боеприпассем тата пехота тиенĕ вуншар автомобилĕсене çапса аркатнă. Петруничев лейтенантăн батарейи Днепр юханшывĕн сулахай енчи сыранне хӳтлесе тăнă вăхăтра юлашки виçĕ кун хушшинче немĕçсем юханшыв урлă каçма хăтланнине тăвата хутчен арката-арката тăкнă. Батарейăран персе немĕç саперĕсемпе салтакĕсене 500 çынна çити вĕлернĕ, 45 автомашинине, зенитнăй пулеметсен виçĕ установкине, темиçе танкне тата саперсене кирлĕ инвентарĕсене нумай пĕтерсе тăкнă. Переправа патĕнчи çапăçусенче оруди наводчикĕсем Артамоновпа Горохов уйăмăнах паттăрăн çапăçнă. Артамонов фашистсен виçĕ танкĕпе 12 автомашинине персе çĕмĕрнĕ, Горохов немĕçсен тăватă орудинен тăракан батарейине путарса лартнă.

Фронтăн Хĕвеланăç енче çапăçакан старший лейтенантăн Рубочкин юлташăн артиллери взвочĕ противникăн танксемпе тунă атакине сирсе ярса, противника пысăк çухату кӳнĕ. Пирĕн оборона линийĕ патне çитесси пиллĕк километр юлсан немĕçсен колонни çине взводри гаубицăсенчен пеме пуçланă. Пирĕн еннелле километр çурă килнĕ çĕре пирĕн артиллеристсем фашистсен танкĕсене çуррине пĕтерсе тăкнă, ытти танкĕсем каялла çавăрăнса тарма пуçланă. Çак çапăçура совет артиллерисчĕсем кунсăр пуçне немĕç пехотинецĕсене 300 çынна çити тата 100 кавалеристне яхăн пĕтерсе тăкнă.

Ывăр орудисен лейтенант Апраксин командир пулса ертсе пыракан батарейин тылне немĕçсем 200 ытла салтакран тăракан десант антарнă, салтаксемпе пĕрле 5 танкетка пулнă. Парашютистсем батарейăна йĕриташра хупăрласа тытса илме хăтланнă. Анчах та пирĕн артиллеристсем çавăнтах йĕриташра оборона организациленĕ. Наводчик Журавлев тӳрĕ наводкăпа персе пирĕн батарея патне сывăхах пыма хăтланнă танкĕсене ним юлми арката-арката тăкнă. Наводчик Протасов татах икĕ танкеткăна стройран кăларнă. Противникăн ытти машинисем вара пирĕн орудисен расчечĕсем çине малалла атака тума хăранă. Батарея çине немĕçсен парашютисчĕсем шăвăнса пынă. Артиллеристсем вĕсене орудисемпе пулеметсенчен умранах тĕллесе персе вĕлерме пуçланă. Икĕ сехет хушши хаярăн çапăçнă вăхăтра немĕç диверсанчĕсем хăйсен салтакĕсене 150 çынна çити çухатнă. Батарейăна пулăшма пырса çитме ĕлкĕрнĕ Липатов лейтенантăн роти тăшман десанчĕн юлашкийĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Пирĕн алла икĕ танкетка, нумай пулеметсем, автоматсем тата радиостанци юлнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче пирĕн пĕр часть противника пысăк çухатусем кӳнĕ. Совет войскисем атакăласа противникăн 22 ДЗОТ-не, противотанковăй 8 батарейине, 12 станковăй пулеметне тата миномĕтсен 5 батарейине пĕтерсе тăкнă. Немĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна яхăн вĕлернĕ. Ултă танк, икĕ мотоцикл, снарядсем тултарилсе кайма тамаççĕ.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-хĕвеланăç енче çапăçакан Турыкин полковникăн чаçĕнчи 109» йышши темиçе ретпе ларса тухнă, вĕçсе çĕкленме хатĕрленнĕ самолечĕсем пулнă. Фашистсен самолечĕсене сывлăша вĕçсе çĕкленме памасăр, пирĕн летчиксем тăшманăн 30 ытла машинине аэродромрах пĕтерсе тăкнă. Каялла тавăрăннă чухне çул çинче совет бомбардировщикĕсен подразделенийĕ çине тăватă «Мессершмитт» тапăннă. Пирĕн стрелок-радистсем çапăçура тăшманăн икĕ машинине персе ӳкернĕ. Çав кунах Галушенко капитанăн звени шоссе çулĕ çинче 15 километр хушши тăсăлса кайнă нимĕçсен хуш-лăхĕ-тăкăлса кайнă нимĕçсен тăкăлса кайнă. Тĕп персе тивретсе, Дмитриев юлташ белофина çавăнтах вĕлернĕ. Тепĕр çапăçура Дмитриев юлташ лейтенантпа Жаба юлташпа пĕрле подразделени умĕнче малта пулнă. Икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине вăйлăн персе тăнă. Белофинсен йывăç тĕми хыçне пытанса ларнă снайперĕ лейтенант çине пеме тĕлленине красноармеец часах асăрхаса илнĕ. Çак вăхăтра Дмитриев юлташăн мĕнпур патронĕсем пĕтсе çитнĕ пулнă. Вара боец, пĕр секунда та шухăшласа тăмасăр, командира хăйĕн кăкрипе хӳтленĕ. Тăшман пульли çулăмлă совет патриотчĕн—Дмитриев красноармеецăн пурнăçне татнă. Герой-боецăн вилĕмĕшĕн тăшмана тивĕçлипе тавăрнă: çапăçу хирне вуншар белофинсем вилсе юлнă.

* * *

Смоленск облаçĕн хĕвеланăç енчи темиçе районне тытса илнĕ немĕç войскисем çине малтанхи кунсенчен пуçласах партизансен отрячĕсем татти-сыпăсем пырса çапма тытăннă. Районсенчен пĕринче немĕçсем персе çĕмĕрнĕ танксемпе автомашинăсене юсакан мастерской организацилеме хăтланнă. Комбайнер Ф. командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ августăн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле çак мастерской çине хăюллăн пырса тапăннă. Немĕçсене 30 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ хыççăн, партизансем танксемпе автомобильсем валли запаслă пайсем тиенĕ 15 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Çав кунах партизансем фашистсен автоколоннине тытса чарса, автопокрышкăсем тиенĕ виçĕ грузовика тата горючи тултарнă 6 цистернăна пĕтерсе тăкнă.

Милиционер Ж. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ Москалька сывăхĕнче фашистсем аэродром туни çинчен пĕлнĕ. Партизансем самолетсене анса лармалли площадка хатĕрлекен немĕç саперĕсем çине пырса тапăннă. Çапăçу хирне немĕç салтакĕсем 20 çын ытла вилсе юлнă, ыттисем тарнă. Партизансем 6 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăн немĕçсем тытса илнĕ районĕсен территорине фашистсем немĕнле закона та пăхăнмасăр советăн çĕршер тата пиншер граждайĕсене вĕлереççĕ, хĕрачасемпе хĕрарăмсене йĕркĕсĕрлеççĕ, халăха çаратаççĕ. Киев облаçĕнчи Каневски районри Селище салинче фашистсем хĕрарăмсемпе хĕрачасен группине пухса вăрмана илсе кайнă та, вĕсене унта тискер-кайăкла йĕркĕсĕрленĕ. Ржищевски районри Гривени салинче немĕçсем, 60 çулхи старик колхозниккрен мăшкăлласа, ăна пăшалсенчен персе тăнă вăхăтрах чупма хушнă. Фашистсем мĕскĕн старикĕн икĕ урине те персе шăтарнă. Кировоград тата Днепропетровск облаçĕсен оккупацинленĕ районĕсенче немĕçсен командованийĕ колхозсен мĕнпур пурлăхĕ немĕçсен аллине куçать тата çав пурлăх çине алă çĕклекен колхозниксене персе вĕлеретпĕр, тесе пĕлтернĕ. Фашистла ирĕçĕрсен тискер ĕçĕсене хирĕç ответлесе, çĕнĕрен çĕршер хресченсем кашни кунах партизансен отрячĕсене кĕреççĕ.

* * *

Греци партизанĕсен отрячĕсем хăйсен ĕçне активлăн туса пыма тытăнаççĕ. Юлашки вăхăтра Итали салтакĕсем час-часах çухалма пуçланă, продовольстви тата чĕртавар уçаркан складсене тăтăшах вут тĕртсе çунтарма тытăннă. Августăн 28-мĕшĕнче партизансем çар эшелонне пысăк крушени тунă. Турци чикки патне каякан Итали салтакĕсем ларса пыракан 35 вагон рельсăран тухса сирпĕнсе кайнă. Крушени вăхăтĕнче 120 салтак ытла вилнĕ тата йывăр аманнă. Августăн 29-мĕшĕнче иккĕмĕш крушени пулнă. Германи валли фруктсем тиенĕ пысăк состава партизансем рельсăран кăларса сирпĕтнĕ. 27 вагон арканса кайнă.

Корфу утравĕ çинче Греци патриочĕсем оливковăй çу хатĕрлекен чылай предприятисене вут тĕртсе çунтарнă, çав çăва Италие ямалла пулнă. Греци порчĕсенчен пĕринче Итали транспортчĕ çинче пушар сиксе тухнă, транспорта Итали валли тĕрлĕрен грузсем тиеме пырса тăратнă пулнă. Пушарта фашистсем Греци халăхĕнчен вăйпах туртса илнĕ питех те нумай çу тата табак çунса кайнă. Транспорта чĕртсе янă тесе шанмасăр арестленĕ çынсен группине илсе пыракан Итали жандармĕсем çине партизансем тапăннă. Çапăçура 7 жандарма вĕлернĕ. Арестленисем партизансемпе пĕрлешсе кайнă.

* * *

Колхоз хресченĕсем пысăк тухăçлă сахăр кăшманне уйăрсенчен пуçтарса кĕме тытăннă. Харьков облаçĕнчи Лозовски районри Ленин ячĕпе тата Хрущев ячĕпе тăракан колхозсем гектартан 500-шер центнер сахăр кăшманнĕ пухса илеççĕ. Купянски районри Рабочисемпе Хресченсен Милицийĕ ячĕпе тăркан ялхуçалăх артелĕнчи звеньевой Черная юлташ гектартан 500—600 центнер кăшман пухса илет. «16-летие РККА» колхозри Григорьева юлташ звенин те кăшман тухăçлăхĕ çавăн пекех пысăк. Курск облаçĕнчи колхозсем пысăк тухăçлă сахăр кăшманĕ туса илеççĕ. Октябрь Революцийĕ 20 çул тултарнă ятпа тăракан колхозри Ситник юлташ звени гектартан 700 центнертан кая мар кăшман илет. Курск облаçĕнчи Борисевски районри 25 ытла колхозра сахăр кăшманĕсене пухса кĕме тытăннă та ĕнтĕ. Грайворонски районри Буденный ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ завода малтанхи хут вуншар центнер сахăр кăшманĕ турттарса пынă.

Киргизири колхозниксем пысăк тухăçлă сахăр кăшманĕ пăхса ӳстернĕ. СССР Верховный Совет депутачĕн Койназарова юлташăн—Фрунзе облаçĕнчи Каганович районĕнчи Калинин ячĕпе тăракан артель колхозницин звени кăçал гектартан вăтам шутпа 850 центнертан кая мар кăшман пухса илет Калинински районра Байгазиева юлташăн звени гектартан 1000 центнер кăшман илнĕ. Киргиз СС Республикинчи Кантски район уборка пуçлансан пĕр кун хушшинчех сахăр заводне кăçал пухса илнĕ 1.585 центнер сахăр кăшманĕ леçсе панă.

Сентябрĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă.

Пирĕн авиаци противник войскисене вăйлăн пыра-пыра çапнă тата аэродромсенче унăн авиацине атакăланă. Сентябрĕн 5-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата противникăн аэродромĕсенче немĕçсен 23 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

Баренцово тинĕсĕнче немĕçсен «У-73» текен подводнăй лодкине тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче противника хирĕç вăйлăн çапăçнă хыççăн, Меттэ юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделени фашистсен чăсĕсене, каялла инçете хăваласа янă. Подразделени халăх пурăнакан виçĕ пункта тата 6 высотана йышăнса илнĕ. Подразделенири боецсем пăшалсенчен ушкăнпа харăс персе тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ. Пулеметсен 50 йăвине, 7 бронемашина, 6 танк, 17 миномет тата 15 оруди пĕтерсе тăкнă; шĕтерсе тăкнă орудисенчен тăваттăшĕ—инçете перекеннисем. Фашистла чăсĕсен салтакĕсемпе офицерĕсем 1500 çынран кая мар вилнĕ тата аманнă. Кĕçĕн лейтенант Калмыков командир пулса ертсе пыракан боецсем хăюллăхпа паттăрлăхăн образецĕсене кăтартса панă. Тăшманăн тылне кĕрсе кайса, вĕсем тăшманăн укрепленийĕсем çине сасартăк тапăннă та, укрепленисенче вырнаçнă фашистсене гранатăсемпе персе пĕтерсе тăкнă. Никулин красноармеец миномĕтран тĕл персе пулеметсен 2 йăвине тата пĕр бронемашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кĕçĕн лейтенантăн Шкробаленко юлташăн артиллери взвочĕ хупă позицисенчен хăйĕн орудийĕсенчен хытă персе тăнă. Немĕç салтакĕсен пысăк груп-

Малалли 2-мĕш страницăра.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳн вĕçĕ

пи взвод персе тăракан позицин сылтăм флангĕнчен пырса кĕме хăтланнă. Тупăсен кĕпçисене çавăнтах тапăнса килекен тăшман еннелле çавăрнă. Совет орудийĕсенчен темиçе хутчен пенĕ тыççăнах нимĕçсем тарма тытăннă, çапăçу хирне вилнĕ тата аманнă салтаксем 27 çын, станковăй пулемет, вуншар винтовкăсемпе автоматсем выртса илнă.

* * *

Совет снайперĕсем тĕл персе тивретни противника пысăк çухату кӳрет. Пĕр çапăçура снайпер Четрадзе 15 фашиста пĕтерсе тăкнă. Вăрçă пуçланнăранпа Далиев снайперăн аллинчен вунтшар нимĕç пĕтнĕ. Виçĕ кун хушши çапăçнă вăхăтра кăна Далиев юлташ 21 фашиста, вăл шутра 2 офицера пĕтернĕ. Снайпер Луцковский хăйĕн винтовкинчен тĕл персе тивретсе пĕр çапăçура тăшманăн 12 салтакне вĕлернĕ. Старший лейтенант Анисимовăн подразделенийĕнче красноармеец-снайперсене Енгалышевпа Сабирова пурте пысăкăн хисеплеççĕ. Çак икĕ снайпер пиллĕк кун хушшинче фашистсен автоматчикĕсене, наблюдателĕсемпе пулеметчикĕсене 17 çынна пĕтерсе тăкнă. Фронтăн Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче снайперсем—хĕçĕн сержант Костриков тата ефрейтор Петунин сентябрь уйăхĕнче 3 кун хушшинче 30 ытла фашиста пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем тĕл пенĕ пирки нимĕçсен хăйсен икĕ ДЗОТ-не пăрахса хăварма тивнĕ. Вăрçă пуçланнăранпа капитан Розанов часĕнчи отличнăй стрелоксем икĕ самолета персе антарнă тата танксен пăхмалли шăтăкăсене тĕл персе тивретсе сахал мар танкистсене пĕтернĕ. Сержант снайпер Ляхунин тăшмана пĕлсе пĕтере-пĕтере тăкать. Противникăн тылне кĕрсе кайса, Ляхунин юлташ пĕр кăсрах нимĕçсен темиçе салтакĕсемпе офицерĕсене, горючи тултарнă 2 цистернăна тата виçĕ мотоциклиста пĕтерсе тăкнă.

* * *

Тугарев лейтенантăн артиллери подразделенийĕ тăшманăн мотоколоннине çĕмĕрсе тăкнă. Сехет çурă хушшинче подразделенири батарейăсем нимĕçсен 4 танкне, 2 бронемашинине, 25 автомашинине, икĕ артиллери орудине, нумай мотоциклсене тата фашистсен 200 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Штурмовик-самолетсен майор Шуст командир пулса ертсе пыракан звени тăшманăн мотоколоннине атакăласа, фашистсен темиçе танкне, ултă тоннăллă грузовой автомобилĕсене 30 яхăн пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пехотине çухатусем кӳнĕ.

* * *

Нимĕç çарĕнчи салтаксем хăйсен тăванĕсенчен хурлăхлă хыпарсем илеççĕ. Германи тылĕнчен хилекен сырусенче вăрçăн йывăрлăхĕсем пирки ӳпкелешни час-часах илтĕнет, нимĕн тума пĕлменни тата шанчăка çухатни çинчен часчасах сырса яма пуçланă. Ленинград фронтĕнче тыткăна парăннă нимĕç салтакĕсем сумĕнче тупнă сырусенчи вырăнсене кĕскен илсе кăтартатпăр. Ефрейтор Вильгельм Гонт патне унăн арăмĕ çапла сырать: «Кăçалхи çу вăхăчĕ ситиччен эпир вăрçă пынине сисмен, анчах та вырăссене хирĕç вăрçă пуçланнăранпа вара пирĕн пурнăç питех те япăхланса кайрĕ. Тунтикунпа ытларикун хушшинче çĕрле кунта каллех сывлăшран килсе тапăнни çинчен тревога пулчĕ. Тепĕр кунне çĕрле каллех бомбăсем килсе пăрахрĕç. Халĕ çак вăл час-часах пулса иртет. Эсĕ сывах пураннине пĕлсе тăма, пирĕн пата часчасах сырса тăр. Пĕрмаях темĕн сырăмар хыпар кĕтсе пуранма питĕ йывăр. Пурте Хĕвелтухăçĕнче пирĕн енчен жертвăсем питĕ те нумай, тесе калаçаççĕ». Альфред Маничек салтакăн арăмĕ Люгауран упăшки патне çапла ответлесе сырса ярать: «Санăн çыру мана питĕ нумай асап кӳчĕ. Эпĕ пĕлетĕп, сана унта питех те, питех те йывăр. Сирĕн патăртан хурланмалли хыпарсем килеççĕ. Эсĕ киле тавăрăнмасан, кунта манпа мĕн пулĕ-ши...». Генрих Киенке салтакăн савнă хĕрĕ хăйĕн сырăвĕнче çапла ӳпкелешет: «Вăрçă маншăн ӳмĕте татрĕ. Мĕншĕн çынсене çавăн чухлĕ нумай вĕлереççĕ-ши. Пирĕн çуртра 4 çын хăйсем кывăлĕсем вилни çинчен пĕлтерӳсем илчĕç. Америка вăрçа хутшăнсан тата мĕн пулĕ-ши вара?». Вилли Кеслер салтакăн арăмĕ Кельмран янă сырура йышăннă тăрăх, вăрçă мĕне пĕлтернине Германире халĕ хăна ăнланса илме пуçланă: «Сывлăшран килсе тапăннисенчен эпир халĕ кашни кулленех хĕнхур хуратпăр, сывлăшран килсе тапăнасси юлашки вăхăтра кулленхи явлени пулса тăчĕ. Çĕрĕ-çĕрĕпе сывăрайман пирки манăн пурнăç халĕ нихăçанхинчен те япăхланса кайрĕ. Кунта халĕ сывлăшран килсе тапăнни çинчен паракан тревога кулленех пулать. Пирĕн Кельна питĕ ватса пĕтернĕ».

* * *

Эстони халăхĕн пиншер чи лайăх кывăлĕсем партизансен отрячĕсене кайнă, вĕсем гитлерла оккупантсене хирĕç паттăрăн кĕрешеççĕ. Лехтепы — Черная шоссе çулĕ патĕнчи районсенче Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ ăнăçлăн çапăçать. Юлашки 6 кун хушшинче отряд нимĕçсен транспорт колоннисем çине 8 хутчен пырса тапăнса, пысăк калибрлă снарядсем тиенĕ 12 автомашинăна, салтаксене валли хĕллехи тумтир тиенĕ 4 машинăна, бензин тултарнă 11 автоцистернăна тата консерва тиенĕ 16 лава пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек пырса тапăннă вăхăтра 100 яхăн фашиста вĕлернĕ. Ялти учитель Т. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ августăн 29-мĕшĕнче Вара çине пырса тапăннă. Нимĕç гарнизонĕнчи салтаксенчен 36-шне пĕтерсе тăкнă, ыттисемĕ тухса тарнă. Партизансем хĕçпăшал нумай тытса илнĕ. Эстони писательĕ В. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрядĕнчи боецсем юлашки кунсенче фашистсен 8 офицерĕпе 45 салтакне пĕтерсе тăкнă. Çак кунсенче отряд продовольстви тиенĕ 14 обоз тата патронсен запасĕпе пĕрле 4 пулемет тытса илнĕ.

* * *

Италири мĕнпур пысăк центрсенче пуринче те—Римра, Миланра, Туринра, Генуйăра тата нумай ялсенче фашистсене хирĕç сырнă пиншер листовкăсем алран алăна сарăлаççĕ. Итали патриочĕсем хăйсен листовкисенче вăрçă ĕçĕсене чарса лартма, Итали çарĕсене Хĕвелтухăç фронтĕнчен илсе кайма, немĕç çарĕсене Италирен хăваласа яма тата Германие продовольстви илсе каяссине чарса лартма ыйтаççĕ. Листовкăсене урамсем тăрăх пăрахса çӳреççĕ, стенасемпе хӳмесем сумне сыпăçтарса хăвараççĕ. Генуйăра листовкăсем сарнăшăн темиçе сынна персе вĕлернĕ.

* * *

Норвегири патриотсем Драммен сывăхĕнчи Гульхагенра тар заводне взрыв туса аркатнă. Взрыв тумалли япаласене вуншар тонна пĕтерсе тăкнă. Завод ишĕлнĕ.

* * *

Совет халăхĕ Хĕрлĕ Çар валли хăватлă резервсем ăнăçлăн хатĕрлет.

Ленинграда, Ленинград хулинчи милицин сержантĕ В. Петров тата милиционер Издон юлташ хăйсен участокĕсенче пурăнакан халăхран доброволецсен боевой отрячĕсене организацилеç. Кашни подразделенирех стрелоксем, гранатометчиксем, пулемет расчечĕсем тата саниторсем пур. Издон юлташ 52 боеца вĕрентсе хатĕрленĕ те ĕнтĕ, халĕ вăл татах 68 боеца вĕрентсе хатĕрлет. Сталино хулинчи ĕçсыннисем танксене пĕтерекенсен групписенче занятисене çӳреççĕ, парашют ĕçне вĕренеççĕ. Темиçе çĕр хĕрача телеграфисткăсемпе телефонисткăсен курсĕнче вĕренеççĕ. Хусан хулинчи Баумански районра 300 ытла осоавиахимовецсем вырăнсене тухса çар тактикине вĕренме тытăннă. Нумаях пулмасть Троицкое ялĕ сывăхĕнче «Противникăн сывлăшран антарнă десантне çĕмĕрсе тăкасси» темăпа вĕренӳ туса ирттернĕ. Çак занятире осоавиахимовецсем пысăк мастерлăхпа маскировка тума, хĕçпăшалпа лайăх усă курма тата разведка тума пĕлнине хăтартнă. Ярославль хулин пур районĕсенче те стрелок-парашютистсен, снайперсен, пулеметчиксен, радистсен, гранатометчиксен групписене тунă. Колхозсенчи çамрăксем çар ĕçне ăнăçлăн вĕренсе алла илеççĕ. Челябинск облаçĕнчи Каменски районри Травянки ялĕнчи çамрăксем кашни хунах стройра утма, винтовкăран пеме, граната ывăтма вĕренеççĕ. Хĕрачасем санитарнăй дружинăра вĕренеççĕ. Таджик ÇС Республикинчи Регарски районри çамрăк колхозниксем Ворошиловски всадниксен группине организациленĕ, вĕсем юланут çинче çӳреме, хĕçпе усă курма вĕренеççĕ. Ереванри Киров ячĕпе тăракан комбинатри, чугунçул узелĕнчи, Масложиркомбинатри пиншер рабочисем Осоавиахим подразделенийĕсенче винтовкăна, пулемета, гранатăна вĕренеççĕ, штыкпа çапăçас тата граната ывăтас тĕлĕшпе практикăллă хăнăхусем илеççĕ.

Сентябрĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникăн хирĕç пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă.

* * *

Башкалевич юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн кавалери часĕсем тăшман тылĕсем тăрăх вăрăм рейд тунă. Соколовский лейтенантăн эскадронĕ вăрманта канма вырнаçнă немĕç пехотин батальонĕ çине пырса тăрăннă. Фашистсене сасартăк пырса çапса, конниксем немĕçсен батальонне çĕмĕрсе тăкнă, радиостанци, мотоциклсем, велосипедсем тата продовольствипе боеприпассем тиенĕ грузовиксем нумай тытса илнĕ. Çакăн хыççăн совет кавалеристĕсене хирĕç çапăçма немĕçсем мотомеханизированнăй чассем тата юнкерски икĕ училищĕра вĕренекенсенчен йĕркеленĕ отряд янă. Кавелеристсем çавăнтах немĕçсене хирĕç çапăçăва кĕрсе кайнă. Старший лейтенант Порох тата политрук Орлов хăйсен боецĕсене тăшман çине хăвăрт тата хăюллă атакăна илсе кайнă. Çапăçу 8 сехет хушши пынă. Фашистсен 300 çынна яхăн вилнĕ тата аманнă. Вилнисен хушшинче немĕç генералĕ пур. Çавăн хыççăнхи çапăçусенчен пĕринче хăюллă кавалеристсем тăшман мотопехотин батальонне пĕтерсе тăкнă тата штабне тытса илнĕ. Рейдра пулнă мĕнпур вăхăт хушшинче кавалеристсем противникăн чылай вăйĕсене фронтран каялла илтертернĕ, тăшманăнне автомашинăсем, броневиксем, орудисем, горючи тата боеприпассем нумай пĕтерсе тăкнă, чылай кĕперсене взрыв туса аркатнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, совет кавалеристĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте фашистсен 1.200 çити çын вилнĕ тата 500 çынна яхăн аманнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче Козуль капитанăн батальонĕ вăйлă çапăçусем туса противникăн пысăк вăйĕсен мĕнпур атакисене 28 сехет хушши ăнăçлăн сире-сире янă, вĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ тата подкрепленисем пырса çитиччен хăйĕн позицийĕсене тытса тăнă. Малтан артиллерирен перçе хатĕрленнĕ хыççăн, ӳсĕр немĕç салтакĕсем атака пуçланă. Немĕçсем çывăхах çитсен, пирĕн стреломсем, пулеметчиксемпе минометчиксем пурте пĕр вăхăтра пеме пуçланă. Тăшмана каялла хăваласа янă. Иккĕмĕш хут атака тунă чух немĕçсен пĕр батальонĕ пирĕн пĕрремĕш ротăн блиндажĕсемпе окопĕсем патне кĕрсе кайнă пулнă. Пĕрремĕш тата виççĕмĕш ротăсен командирĕсем Шереметьевпа Зуев юлташсем хăйсен боецĕсене атакăна илсе кайнă. Тăшманăн 150 ытла салтакĕ вилнĕ, 21 салтакĕ тыткăна парăннă. Йĕритаврa хупăрласа илнĕ пек кăтартас тесе, немĕç автоматчикĕсен группи пирĕн тыла кĕрсе кайса пеме тытăннă. Старшина Шорников тĕл пересекен стрелокпа пĕрле фашистсен автоматчикĕсене хăвăрт пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем çĕрле виçĕ хутчен атака тума хăтланнă, анчах ăнăçсăр пулнă. Çĕрлехи çапăçура кĕçĕн лейтенантăн Сурков юлташăн взвочĕ хăюллă контратака туса немĕçсен пĕр ротине пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă тата 12 салтака тыткăна илнĕ. Артиллеристсем, пулеметчиксем тата минометчиксем противника аркатса тăкмаллах пырапыра çапнă. Козуль капитанăн батальонне хирĕç çапăçнă çĕрте немĕç салтакĕсемпе офицерĕсем 600 çын ытла вилнĕ тата аманнă, 12 оруди, 7 миномет тата 11 пулемет пĕтнĕ.

* * *

Лейтенант Трушкинăн тата кĕçĕн лейтенант Шевченкон батарейисем нимĕçсен автоколоннине çĕмĕрсе тăкнă. Малтанхи залп хыççăнах немĕçсен малта пыракан машинисем сывлăша сирпĕнсе кайнă. Сиенленеймен машинисене вăрманалла илсе каяс тесе, фашистсем енчен енне чупкалама пуçланă. Çавăн чухне вара кĕçĕн лейтенант Шевченко хăйĕн батарейинчи орудисене уçă позицине илсе тухса вырнаçтарнă та, фашистсен колонни çине тӳрĕ наводкăпа пеме тытăннă. Артиллеристсем пырса противникăн 30 грузовой машинине, çăмăл автомобильне тата 4 мотоциклне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Советлă Эстонин хулисемпе ялĕсене тытса илсе, немĕç фашисчĕсем Эстони халăхне пĕтерсе тăкма тытăннă. Кашни хулана, местечкăна тата çынсем пурăнакан кашни пункта оккупацилеме чухнех пур çĕрте те немĕçсем çаратаççĕ, ирĕксĕрлеççĕ тата массăллăн вĕлереççĕ. Равила вулĕсĕнче пурăнакан Александр Кельгумяэ, фашистсен тамăкĕнчен тарса килнĕскер, çапла каласа парать: «Фашистсем Лихула местечкăна йышăнса илнĕ вăхăтра эпĕ унта пулнă. Палачсем малтанхи кунĕнчех ним айăпсăр вуншар çынсене перçе вĕлерчĕç. Перçе вĕлернисем хушшинче çамрăк арçын ачасемпе хĕрачасем 13 çын пулнă».

Тарту хулин коммуналлă хуçалăх работникĕ А. Янсен юлташ çапла калаçа панă: «Хулари паркра немĕç штурмовикĕсем манпа кӳршĕре пурăнакан Карл Вепкен 11 çулхи ывăлне тытса чарнă. Ача мăйĕнчи хĕрлĕ галстука курсан фашистсем пионера ярса тытса çывăхри çӳллĕ йывăç патне илсе кайнă. Бандитсенчен пĕри вĕрен илсе пынă. Садистсем пĕр хумханмасăр çавăнтах ункă тунă та, ăна ачана тăхăнтарса, йывăçран çакса хунă. Вилĕ икĕ кун хушши паркра çакăнса тăнă. Ачине пытарма ашшĕпе амăшне ирĕк паман».

Хăйĕн ирĕкĕпе тытăкăна лекнĕ немĕç салтакĕ Франц Гофман çапла пĕлтернĕ: «Эстонири пĕр пĕчĕк ялта эпĕ тĕлĕнмелле хăрушă сцена куртăм. Ĕçсе супнă немĕç салтакĕсен ушкăнĕ фельдфебельпе пĕрле Касперт ятлă хресченĕн пӳртне çĕмĕрсе кĕчĕç. Киленче 70 çулхи хресчен тата унăн арăмĕ икĕ пĕчĕк мнукĕпе пĕрле пулнă. Фельдфебель сысна çури тата чăхсем пама ыйтрĕ. Старик: пирĕн сысна çури çук, чăхсене салтаксем илсе кайрĕç, тесе ответлерĕ. Урса кайнă гитлеровец старике чиксе пăрахма хушрĕ. Салтакĕсем кайран пурне те—карчăкне те, пĕчĕк ачисене те вĕлерчĕç».

Эстони халăхĕн мĕнпур йăхне çĕр пичĕ çинчен шăлса тăкăпăр тесе, фашистсем усçăнах мухтанаççĕ.

Фадден заявленийĕ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Канберрăран пĕлтернĕ тăрăх, Австралин премьер-министрĕ Фадден вăрçă пуçланнăранпа икĕ çул тултарнă ятпа калану сăмахĕнче çапла пĕлтернĕ: эпир Совет çарĕсем вăйлăн хирĕç тăнине хавхалансa сăнаса пыратпăр. Хĕрлĕ Çар геройла хирĕç тăни тимĕр стена пулса тăрать, çав стена сумне Германи фашисчĕсен вăйĕсем пырса çапăнса арканса каяссине эпир шанасси вăйлансах пырать

Комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникĕ

Мускаври предприятисене, стройкăсене, складсене тата учрежденисене пурте—тин çеç ĕçлеме тытăнакан чи çамрăккисем те, производствăра нумай çулсем хушши ĕçленĕ ватă кадровиксем те пынă. Çĕршыв оборонин фондне çĕршер пин тенкĕ ухса, çĕршер тонна нумай тĕрлĕ продукци парса палла турĕç Мускав çыннисем Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери XXVII кунне. Комсомолецсемпе çамрăксен Пĕтĕм Союзри воскресникĕ Мускаври ĕççыннисен ĕç героизмне, вĕсем паттăр Хĕрлĕ Çарпа тачă çыхăну тытнине кăтартакан хăватлă демонстраци пулса тăчĕ.

Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, Мускав хулин Ленинградски тата Ленински районĕсенче 50.000-шер çын ĕçленĕ, Москворецки тата Фрунзенски районĕсенче 45.000-шер çын, Кировски районра 40.000 çын, Краснопресненски районра 35.000 çынна яхăн ĕçленĕ.

Ленин хулинчи çамрăксем, хĕрачасем, ватă рабочисемпе служащисем 540 пин çынна яхăн сентябрĕн 7-мĕшĕнче, Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери хунĕнче станоксем çинче, хула çывăхĕнчи вырăнсенче, транспорт çинче вăй-хала хурса ĕçленĕ, вĕсем пахча-çимĕçсем хатĕрлеме, вутă тата кăмрăк пушатма пулăшнă.

Укрепление тунă Н-ски районĕнче пиншер çын ĕçленĕ. Ленинград патне пымалли çĕрте тăшмана пӳлмелли çĕнĕ те çĕнĕ зырăнсем тунă.

Киев хулинчи—фашистла хĕтӳсем тапăнничен çине тăрса хӳтлекен хулари çамрăк арçынсемпе хĕрачасем комсомолецсемпе çамрăксен Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери кунĕ ячĕпе пулнă Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш воскреснике активлăн хутшăннă.

Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, Киевра воскресникре 30 пин çын хутшăннă. Чугунçул çинче комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ пысăк çĕкленӳпе иртнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, 30 çул çинче кăна воскресникре 600 пин çынна яхăн хутшăннă.

Çамрăксен Пĕтĕм Тĕнчери кунĕ ячĕпе Тбилисинче, Ташкентра, Харьковра, Тулара, Магнитогорскра, Сталинора, Хабаровскра, Совет Союзĕн ытти хулисенче те воскресниксем пулнă.

Пурте фронт валли! Пурте çĕнтерӳ валли!—çак лозунг сентябрĕн 7-мĕшĕнче уйрăмах хăватлăн янăрарĕ. Çак лозунг фашизма çĕнтерме малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме чĕнекен боевой лозунг вырăнне пулчĕ. (ТАСС).

Воскресник пысăк çĕкленӳпе иртрĕ

* * *

ХĔРЛЕ ЧУТАЙ. Сентябрĕн 7-мĕшĕнче час-часах çумăр çукаларĕ. Анчах çамрăксене япăх çанталăк та хăратаймасть. Районри комсомолецсемпе çамрăксем, пĕтĕмпе 1.225 çын, инструментсем йăтса воскресника тухрĕç. Вĕсемпе пĕрле ваттисем те—пурĕ 9.000 çын хастарлă ĕçлерĕç. Нумайĕшĕ колхозсене уборкăра пулăшрĕç. 200 çын вăрман хатĕрленĕ çĕрте 800 тенкĕлĕх ĕçлерĕç. Çав кун 9000 çын 7.416 ĕçкунĕ туса 15 тонна тĕштырă, 700 тенкĕ укçа ĕçлесе илчĕç. Ĕçлесе илнĕ тырăпа укçана оборона фондне пачĕç.

СЫРОМЯТНИКОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

ВĂРМАР. Туллимар даннăйсем тăрăх, воскресника 5.000 çын ытла хутшăннă. Вĕсенчен 3.012 çын—комсомолецсемпе çамрăксем. Çумăрлă çанталăка пăхмасăрах, нумай объектсенче ĕç хĕрӳллĕн пычĕ.. Райцентрти учрежденисенче ĕçлекенсем 45 çын чугунçул çинче 203 тенкĕлĕх ĕçлерĕç. 60 çын райсоюзра тата Союзплодовощра 310 тенкĕ ĕçлесе илчĕç. Пысăк Енкассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем хăйсен шкулĕ валли 294 тенкĕлĕх вутă хатĕрленĕ. 4.638 çын колхозсенче ĕçлесе 3.407 ĕçкунĕ турĕç.

АВЕРЬЯНОВА.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

УЛАТĂР. Сентябрĕн 7-мĕшĕнче паровозсем юсакан заводра чылайăн ĕçлерĕç. Улатăрти 6-мĕш, 7-мĕш номерлĕ шкулсенче вĕренекенсем «Прогресс» колхозра ĕçлесе 60 ĕçкунĕ турĕç. Нумайĕшĕ депора паровозсем юсарĕç, 616 тенкĕ ĕçлесе илчĕç. 22 çын вăрман заводĕнче 172 тенкĕлĕх ĕçлерĕç. Ĕçлесе илнĕ укçана оборона фондне панă.

ФЕДОРОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

ЭЛĔК. Вырăс Сурăмра воскресник организованно иртрĕ. Ялти 9 комсомолец воскреснике 109 çамрăка хутшăнтарнă. Вĕсем 115 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Вутланти туллимар вăтам шкулта вĕренекенсемпе вĕрентекенсем 174 çын колхозра ĕçлесе 93 ĕçкунĕ тунă. Ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕшĕн тухакан тырра пĕтĕмпех оборона фондне парăççĕ.

СОЛОВЬЕВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Пурте фронт валли, пурте çĕнтерӳ тума!—çакăн пек лозунгпа иртрĕ комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникĕ. Хулари предприятисем — комбинатпа «Большевик» завод коллективĕсем ытти кунсенчи пекех пысăк хастарлăхпа ĕçлерĕç. Нумай рабочисемпе работницăсем хăйсен ĕç нормисене 2—3-шер хут иртерсе тултарчĕç. Древкомбинатри Алексеев, Ширяев тата ытти юлташсен бригадисем те нормăсене 200-шер процент тултарса ĕçлерĕç.

Чугунçул линийĕ çинче ĕçлеме 500 çын ытла тухнă. Кунта уйрăмăнах хулари вăтам шкулсенче вĕренекенсем, учрежденисемпе организацисенче ĕçлекенсем пысăк активлăх кăтартрĕç. Вĕсем темиçе çĕршер кубометр çĕр чавнă, тиенĕ вагонсене пушатнă т. ыт. Воскресника хилхуçи хĕрарăмĕсем те хутшăнчĕç. Интернациональнăй урамран кăна 38 хилхуçи хĕрарăмĕ тухнă. Механизацилене вăрман пунктĕнче ĕçлекенсем вăрман склачĕсенче ĕçлерĕç. Экономист Тимофеев юлташ бригади (5 çын) 130 кубометр вутă купаланă. Туллимар даннăйсем тăрăх, хулари предприятисенче, чугунçул транспортĕнче тата вăрман хатĕрленĕ çĕрте 3.000 çын ытла ĕçленĕ. Ĕçлесе илнĕ укçана вĕсем пĕтĕмпех оборона фондне панă. **(Хамăр корр.).**

* * *

Комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникĕ «Красный молот» артельте йĕркеллĕ иртрĕ. Воскреснике пур коммунистсемпе комсомолецсем те хутшăннă. Союзра тăман çамрăксемпе пĕрле 56 çын ĕçлесе илнĕ 355 тенкĕ укçана оборона фондне панă. Çĕвĕ çĕлекен цехри çамрăксен бригади лайăх ĕçлерĕ. Уйрăм юлташсем, сăмахран, Альбровская, нормăна 457 процент тултарса ĕçлерĕç.

Столярнăй, лудильнăй цехсенчи бригадăсем те ĕçре пысăк хастарлăх кăтартрĕç. Сапожнăй цехри çамрăк рабочи Алексеев юлташ нормăна 190 процент тултарчĕ.

А. ЭРРЭ.
ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи хĕрарăмсем Совет Союзĕнчи хĕрарăмсене саламлани

ÑЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Чылай хĕрарăмсем—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи хĕрарăмсен движенийĕн, наукăн, культурăпа искусствăн палла деятельсем хĕрарăмсен Мускаври митингне саламсем янă. Çав саламсем Америкăри миллион хĕрарăмсем СОР Союзĕнчи хĕрарăмсемпе туслă пулни çинчен каласа параççĕ.

Саламсене «СОР Союзĕпе сыхăну тытас тĕлĕшпе ĕçлекен Советăн» председателĕ Мэри Ван Клик, колледж профессорĕ Уэлсли Вида Скаддер, палла журналистка Анна Луиза Стронг янă.

Швеции хĕрарăмсем Совет Союзĕнчи хĕрарăмсене саламлани

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Хĕрарăмсен—Швецире Совет обществин членĕсен, общественнăй деятельсен, адвокатсен, писательницăсен, артисткăсемпе работницăсен группи хĕрарăмсен Мускаври митингне çакăн пек телеграмма янă:

«Сире, Совет Союзĕнчи геройла хĕрарăмсене, Швеци хĕрарăмĕсем, хăйсен тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн тăраканскерсем, чĕререн саламлаççĕ. Эпир, мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле тăрса, гитлеризма пуçĕпех пĕтерсе тăкассишĕн, хăюллăн та паттăрăн кĕрешнине курса, эпир сире юрататпăр. Совет Союзĕн тата гитлеризма хирĕç кĕрешекен тĕнчери мĕнпур халăхсен пĕрлешӳллĕ вăйĕпе çĕкленсе эпир часах татăклă çĕнтерӳ тăвассине пĕр пикĕленмесĕр шанса тăратпăр»

Колхозри коммунистсем

ИЕПРЕÇ. «Молния» колхозри коммунистсем колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнă хыççăн ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе вăйлă кĕрешӳ пуçарса ячĕç. Коммунистсем чылайăшĕ икĕ сыннăн ĕçлеççĕ.

ВКП(б) пуçламăш организацин секретарĕ Т. Архипов юлташ пахча-çимĕç туса илес ĕçре ĕçлет. Уйри тырпула пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе те тăрăшать. Халĕ вăл капансем тума пуçлăшать. Кунсерен 55—60 лавран кая мар капансем тăвать. Вăл икĕ ĕçре те ĕлкĕрет.

Çавнашкалах И. Ефремов коммунист та ĕçĕн лайăх тĕслĕхне кăтартать. Колхозра вăл туман ĕç çук. Тырă вырать, кĕлте кӳрет, кĕрхи тырăсене акать, капансем тăвать. Вăл ялхуçалăх машинисен техникине лайăх вĕренсе çитнĕ. Жнейкăсемпе лобогрейкăсене тата сеялкăсене пĕр вăрри тумасăр ĕçлеттерет. Кĕрхи тырăсене акнă вăхăтра 4,5 гектар акăс вырăнне 7,5—8 гектар акса пычĕ. Халĕ вăл çурхи тырăсене вырас ĕçре лобогрейкăпа ĕçлесе кулленхи нормăна ытлашшипех тултарать.

Н. Порфирьев юлташ уйăрах тата колхозри строительство ĕçĕнче тăрăшать. Вăл çуракинче те, кĕракинче те машиновед пулса ĕçлерĕ. Халĕ жнейкăпа тырă вырса икшер норма тултарать. Ĕçре хăйĕн пултарулăхне кăтартнă май, халĕ ăна пуçламăш парторганизаци çак кунсенче парти члена илнĕ.

В. Михайлов коммунист темиçе çул хушши уйăрăн бригадирĕ пулса ĕçлет. Унăн бригади çулсеренех малти ретре пырать. Кăçалхи çул та унăн бригади уйри тырпулсене чи малтан пуçтарса кĕртрĕ. Кĕрхи тырăсене планпа пăхнинчен пĕр кун малтан акса пĕтерчĕ. Халĕ пăрça йышши культурăсене пуçтарма тытăннă.

Колхоз производствинче хутшăнса ĕçленипе пĕрлех, вăл общественнăй ĕçре ĕçлеме те вăхăт тупать. Колхозра МОПР организацин ĕçне йĕркелесе ячĕ. Заем уполномоченнăйĕ пулса ĕçлет. Вăрçă ĕçне вĕренес ĕçе те активлă хутшăнать.

Государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе коммунистсем ответлăха хăйсем çине илнĕ. Ыраш, тулă, сĕлĕ йышши культурăсем тăрăх обязательствăсене 100 процент тултарнă. Сĕт-çу, аш-кахай, çăмарта, пахча-çимĕçсенчен хăяр парса татнă.

Коммунистсем колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Кану вăхăтĕнче политикăллă ыйтусем тăрăх тăтăшах калаçусем туса ирттереççĕ. Стена хаçачĕ тухса тăрать. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Симбирский, Орлова, Порфирьев тата Архипов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Халĕ колхозра кĕлте кӳрес, авăн çапас, силос хывас, йĕтĕн татас ĕçсем пыраççĕ.

В. ВИШНЕВСКИЙ.

Ĕçе организацилеме тăрăшман колхозра

КАНАШ. Елмач ялсоветне кĕрекен «1-ое Мая» колхозăн ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пыма шӳт условисем те çителĕклĕ. Колхозăн 63 лаша, тырă вырмалли 4 машина, 3 сеялка пур. Ĕç вăйĕ те кирлĕ таранах пур. Апла пулин те, колхоз чылай ĕççемпе кая юлса пырать. Ыраш вырма та, çурхи тырăсене вырма та кая юлса тухнă. Колхоз правленийĕ ĕç дисциплинине çирĕплетме тăрăшман, çавна пула ĕнтĕ пур ĕç те хăй тĕллĕн пулса пынă. Тырă вырнă çĕрте юлашки кунччене машинсемпе пачах ĕçлемен. Колхоз правленин штатне питĕ ӳстерсе янă. Правленинче: председатель тата унăн заместителĕ, счетовод, ĕçкунĕсене шута илекенсем иккĕн, завхоз, кладовщик, техничка. Кусем пĕри те тырă вырма тухмаççĕ. Апла пулин те колхозниксем ĕçленĕ ĕçкунĕсене август уйăхĕшĕн ĕç кĕнекисем çине çырса паман. Колхозниксем тырă вырнă çĕрте миçе ĕçкунĕ тунине пĕлмеççĕ.

Сентябрĕн 1-мĕшĕнче пур бригадăсенче те пухусем пулса иртрĕç. Колхозниксем пурте ĕç дисциплинине çирĕплетме, правлени енчен ертсе пыраççĕ пăлăтма ыйтрĕç. Çакăн хыççăн та правлени енчен кирлĕ мерăсем йышăнни пулмарĕ. Авăн çапма МТ Станцин молотилкине илсе пырса партни пĕр эрне иртрĕ, анчах авăн çапма тытăнман-ха.

Кĕрхи çĕртме тума пуçламан. Лашасене япăх пăхнипе пăсса пĕтернĕ.

Выльăхсене хĕлкаçарма та çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. Силос хывмалли плана 20 процент çеç пурнăçланă. Силос валли акнă икĕ гектар хĕвелçавăрнăшне силос тумасăр ватăлтарса янă.

Çак йĕркесĕрлĕхсене халех пĕтерни кирлĕ. Районри çĕрĕç пайĕн «1-ое Мая» колхоза хăвăрт пулăшас пулать.

Я. ЛУКИН.

Звено лайăх ĕçлет

ВĂРНАР. «Писнер» колхоз государствăна тырă леçсе пама ятарласа звено тунă. Ана В. Егоров колхозник ертсе пырать. Вĕсем кунне икĕ хут тырă леçсе параççĕ. Колхоз халь государствăна ыраша сĕлĕ парса татнă.

В. МАКСИМОВ.

Хĕрарăмсен пултарулăхĕ

Смена ĕçе тытăнман-ха. Работницăсем ток парасса кĕтсе тăраççĕ. Станочница Оля Зубрилина «рейсмус» станок таврашĕнчи детальсене пуçтарать. Вăл паян татах та пысăкрах çитĕнӳ тума шутлать. Ĕнер Христиния Ефимовăпа иккĕшĕ те вĕсем нормăна пĕрре çурă хут тултарнă.

Машинăй отделенине васкаса цех начальникĕ Тихонов юлташ пырса кĕрет. Аллинче унăн детальсем. Вăл тӳрех Зубрилина патне пырать.

— Акă çак заказа тумалла. Мĕнле шутлатăн, пултарăн-ши? — тет вăл хăй аллинчи детальсене хĕрачана парса.

— Мĕншĕн пултармăл? Анчах куна «фуганка» çинче тума лекет, — ответлет Зубрилина юлташ.

Хĕрачапа цех начальникĕ «фуганка» станок патне куçаççĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех станока вырнаçтарса, йĕркеленсе лартаççĕ.

— Эпĕ вĕт ку станокпа та ĕçленĕ. Мĕншĕн иккĕленетĕр вара эсир, — тет хĕрача.

Завод гудокĕ янтраса калять. Смена ĕçе тытăнать. Станоксен, машинăсен шавĕ вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Халь акă ахаль тăракан çук; пурте хастарлă ĕçе тытăнчĕç.

Кăнтăрла çитес умĕн Зубрилина юлташ патне каллех цех начальникĕ пырать.

— Ĕçсем мĕнле пыраççĕ? — ыйтрĕ вăл станочница туса кăларнă детальсем çине пăхса.

— Начарах мар пек. Сирĕншĕн темле. Ман шутпа эсир пана заказа эпĕ кăнтăрлахи апата кайиччен туса пĕтеретĕп...

Ку хыпарсене илтсен начальник тĕлĕннĕ пек пулчĕ. Мĕнле-ха, вăл заказа пурнăçлама сахалтан та пĕр кун кирлĕ. Ситменне тата вăл сложнăй, çĕнĕ япала.

Чăнах та хастарлă хĕрача хăй халăнă сăмаха ăнăçлăн пурнăçа хĕртрĕ. Шăп кăнтăрлахи перерыва тухиччен 5 минута малтан вăл заказа пурнăçларĕ.

— Маттур, — терĕ ăна цех начальникĕ. — Çавăн пек ĕçлемелле те пирĕн. Мĕншĕн тесен, стахановла ĕçпе эпир тăван Хĕрлĕ Çара тăшмана хăвăртрах çапса аркатма пулăшатпăр..

* * *

Оля Зубрилина «Труженик» завода ирĕнĕ çулта килсе кĕнĕ. Ун чухне хĕрача станоксемпе ĕçлеме мар, вĕсем патне пыма та хăранă. Вĕсен йĕркине вăл нимĕн те пĕлмен. Çавăнпа ăна станоксем таврашĕнчи материалсене, детальсене урăх çĕре йăтса куçарнă ĕçе тăратнă. Пĕр уйăх иртнĕ... иккĕ... Хĕрача станок çинче ĕçлеме хăнăхма пуçланă. Каярахпа вара ăна станочница вырăннех тăратнă.

Акă пăх та кур халĕ ăна. Вăл «рейсмус» çинче те, «фуганкăпа» та тата циркульпăй пăчкăллă станокпа та ĕçлет. Вĕсенчен чылайĕшне вăл юлашки уйăхсенче вĕренсе çитнĕ.

Анчах столярпăй цехра темиçе станок çинче тата нормăна ирттерсе тултарса ĕçлекен Зубрилинăсем сахал мар. Вĕсен хисепĕ вунпăрăн шутланать. Пурте вĕсем ĕлĕкхи чернорабочницăсем, подручнăйсем, подносчицăсем.

Маруся Тихонова заводра виççĕмĕш çул ĕçлет. Юлашки вăхăтра вăл 3—4 станок çинче ĕçлеме вĕренсе çитрĕ. Халь циркульпăй пăчкăллă станокпа ĕçлесе, хăйĕн ĕç нормине ялан ирттерсе тултарать. Пĕр кун тумалли ĕçе 4—5 сехет хушшинче туса пĕтернĕ тĕслĕхсем те сахал мар.

Христиния Ефимова та темиçе станок çинче ĕçлет. Хуть те темĕнле заказ пулсан та, вăл ăна пысăк пахалăхпа, кĕске срок хушшинче пурнăçлать. Унăн пултарулăхĕ çинчен цехра кăна мар, пĕтĕм заводри рабочисем пĕлеççĕ.

Нумаях та пулмасть Ефимова юлташ 3 сехет тумалли ĕçе сехет çурăра пурнăçларĕ.

* * *

Фанера тăвакан цехра чи стложнăй станоксем çинче ĕçлекенсенчен хăшпĕрисем Хĕрлĕ Çара кайрĕç. Халĕ кунта пĕтĕм рабочисен 70 процентне яхăн хĕрарăмсем. Цехра вĕсен алли пырса тĕкĕнмен вырăн та çук.

Прессем тата лущильпăй станоксем çинче ку тăринчен яланах арçынсем ĕçленĕ. Вăл участокри ĕçсене «арçынсен ĕçĕ» тесе шутланă. Халь акă вĕсемпе, арçынсем фронта кайсан, Мальникова, Трофимова, Подклетнева тата Беззаботнова юлташсем ĕçлеме пуçларĕç. Цех начальникĕ Герасимов юлташ калăнă тăрăх, хĕрарăмсем «арçынсен профессине» хăвăртăн вĕренсе çитрĕç, вĕсем производствăра паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Подклетнева юлташ стружка цехĕнче ĕçленĕ чухне кашни кун нормăна икĕ хут ирттерсе тултарнă, вăл пĕр вăхăтрах икĕ станокпа ĕçленĕ. Ситĕлĕклĕ таран материал парса тăнă чухне халĕ те вăл икĕ норма тума пултарать.

Хăма çуракан цехра та хĕрарăмсем чылай. Тĕрлĕ сĕрте ĕçлеççĕ вĕсем: пĕренесем йăвантараççĕ, рама патĕнче тăраççĕ, хăмасем йăтаççĕ, К. Иванова М. Архипова юлташсем нумай пулмасть подносчица пулса ĕçлетчĕç, халĕ вĕсене пăчкăллă станоксем çумне тăратнă. Вĕсем хăйсен ĕçне юратса тăваççĕ, пысăк пахалăхпа пурнăçлаççĕ.

Заводри хĕрарăмсен ĕçри хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем кашнинех лайăхрах ĕçлесшĕн, государствăна пысăк усă парасшăн. Вĕсем пĕлеççĕ: производствăра стахановла ĕçлени тăшмана хăвăртрах çапса аркатма Хĕрлĕ Çара пулăшать.

ХАР. ЛИСИН.

ÇĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).**

„Авангард“ артельре

Канашри «Авангард» промысла артелĕнчи рабочисемпе работницăсем производствăра пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Июль уйăхĕнчи плана кирлĕч завочĕ 121 процент, алсатулĕ çĕлекен цех — 370, вĕрен явакан цех 418 процент тултарнă т. ыт. те. Август уйăхĕнчи ĕçсен итогне тăвайман-ха, анчах результатсем начар мар пулаççĕ. Утильцехра плана тултарманнисем пĕр сын та çук. Т. Игнатьева, М. Иванова, М. Яндушевская тата ытти чылай юлташсем нормăна 130—150 процентран кая мар тултараççĕ.

Стахановла ĕçлекенсем ытти цехсенче те нумай. Артелĕн парикмахерскисем пур. Мастерсенчен Чернова, Мышева, Шаптенкева, Кузнецова юлташсем ялан нормăна ирттерсе тултараççĕ.

Тимĕр-тăмăр пухма панă çултан план артель ытлашшипех тултарнă.

Сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнурăн сыхланма хатĕрленнессине те лайăх организацилеменĕ. Хальхи вăхăта кунта ПВХО кружокĕсенчен 100 çын ытла вĕрентсе кăларнă.

Т. МАЙОРОВ.

Нимĕçсен фашистла войскисем Ленин хулине хăратса тăраççĕ. Вĕсем ăна турта илме тăрăшаççĕ. Анчах та тăшманăн ултавлă планĕсем, нихăçан та пурнăçа кĕмĕç. Ленинград ĕççыннийĕсем пурте пĕр çын пек пулса, хăйсен хулине, хăйсен килçурчĕсене, хăйсен семьисене тата хăйсен ирĕклĕхĕпе чыслăхне хӳтлеме çапăçăва тухаççĕ. Хаяр та ылханлă тăшмана пуçĕпех çапса аркатăпăр. Ленинградри рабочисем, служащисем тата интеллигентсем ĕçрен пушă вăхăтра çар ĕçне тимлĕн вĕренеççĕ, хĕçпăаллă кĕрешĕвĕн меслечĕсене хăнăхаççĕ, фашистла сынçиенсен бандисене хирĕç çапăçакансен боевой речĕсене тăма хатĕрленеççĕ. **Укерчĕн çинче:** Ньски заводри рабочисем танксене хирĕç кĕрешме вĕренеççĕ. Противник танкне малалла ирттерсе ярса, окопсене пытанса ларнă боецсем сиксе тăраççĕ те, горючи тултарнă бутылкăсем ывăтса танк моторне çĕмĕреççĕ.

Б. УТКИН фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС).

Улăх утине иккĕмĕш хут çулаççĕ

ИШЛЕЙ. Тăван ялсоветне кĕрекен Калинин ячĕпе тăракан колхозра каçхине те уйăх сутипе тырă вырассине организацилеменĕ. Çалпа ĕçленипе колхоз сентябрĕн 5-мĕшĕнче çурхи тырăсене вырса пĕтерчĕ. «Çĕнĕ пурнăç» тата «Большевик» колхозсем те юлашки гектарсене выраççĕ. Атăл хĕрринчи колхозсенчен пуçласа Унгă шывĕ тăрăхĕнчи колхозсем таранах çуртри выоса пĕтернĕ уйăсем чăсăлса выртаççĕ.

«Ишлей» колхозĕ авăн çапас ĕçе уйрах организацилеменĕ. Кĕлте кĕртнĕ çĕрте, кĕлтене капана хывнă çĕрте тата дзăн çапнă çĕрте колхозницăсем ĕçлеççĕ.

«Çĕньял» колхоз улăхри утăна иккĕмĕш хут çулма тухрĕ. Силос хывмалли вунăкунлăх пуçланнăранпа Çĕньял ялсоветĕнчи колхозсем 50 тонна силос хыврĕç.

С. ГОРЛАНОВ.
Е. СМЕЛОВ.

Колхозсене пулăшма кайрĕç

ÇĔРПУ, сентябрĕн 6-мĕш. **(Телефон тăвăç).** Районĕпе 16 колхоз çурхи тырăсене вырса пуçтарчĕç. Паян, уй ĕçĕ каярах юлса пыракан колхозсене пулăшма, педучилищĕре, фельдшерсен шкулĕнчи тата хулари вăтам шкулсенче вĕренекенсемпе преподавательсем тухса кайрĕç. Вĕсем колхозсенче 5 кун ĕçлеççĕ. Ĕçлесе илнĕ тупăша оборона фондне параççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Выранти мĕнпур ресурссемпе туллин усă курар

Советсен çамрăк республики хăйĕн пĕтĕм вăйне хурса тăшмансен вĕçĕмсĕр кĕтĕвĕсене сирсе ывăтассишĕн кĕрешнĕ хунсенче Ленин:

— Камăн резервсем ытларах, вăй илмелли çĕлкуçĕсем ытларах, халăх йышшинчи чăтăмлăх ытларах, вăрçăра çавă çĕнтерет,— тесе калана.—Çаксем пирĕн пурте нумай,—тесе çырнă Владимир Ильич, эпир çĕнтерес шанчăка çирĕплетсе парса.

Çак сăмахсене 1919 çулта калана пулнă. Юхăнса вăйсăрланнă Совет Российин хăйĕн нумай тĕрлĕ тăшманĕсене ун чухне те çĕнтернĕ. Анчах унтанпа мĕнтери нумай ӳснĕ-ха совет государствин вăй-хăвачĕ!

Пирĕн çĕршыв хăйĕн аллинче çавтери пысăк ресурссем тытса тăрать. Халĕ çав ресурссемпе мĕнле те пулин ытларах та туллинрех усă курас задача тăрать. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче тăван çĕршыв хăшпи районран, хăшпи облаçран: промышленность валли, хĕçпăшал тăвас ĕç валли ытларах чĕртавар пама, ытларах продовольстви пама, вырăнти ресурссемпе пур енĕпе те анлăрах усă курма тивĕçлине ыйтать.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăнти чĕтавартан куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви туса кăларас ĕçе вăйлатмалли мероприятисем çинчен 1941 çулти январĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановлени вырăнти организацисем пуçарулăхне вăйлăн хăлартлантарчĕ. Вырăнсенче таварсем ытларах туса кăларма, продовольстви туса кăлармалли вырăнти майсемпе лайăхраххăн усă курма пуçларĕç. Анчах мĕн тунине халĕ çителĕклĕ тесе шутлама çук. Вырăнта харпăр-хăй вăйĕпе тума пултаракан таварсене ниепле те государствăран ыйтма юрамасть. Материалсене вырăнтах тупма май пур пулсан, вĕсене урăх çĕртен турттарса транспорт ĕçне йывăрлатни преступлени туни шутлать.

Пĕтĕм çĕршывра пуçланса кайнă политикăллă çĕкленӳ рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин — мĕнпур ĕççыннисен пуçарулăхне çавтери хăватлăн хускатрĕ. Пиншер те пиншер çынсем хăйсен мĕнпур пултарулăхне хурса ĕçе лайăхлатма майсем шыраçç, вĕсем çине тăни, вĕсен хастарлăхĕ, пуçарулăкĕпе тавçăрулăхĕ пĕр ĕмĕтшĕн—тăван çĕршывăн ресурсĕсене ӳстересшĕн хавхаланса çунаççĕ.

Кузбасри Киров ячĕпе тăракан шахтăра вăрçă вăхăтĕнче çĕркăмăрăк кăларас ĕç нумай ӳснĕ, кунта вара çĕркăмăрăне çӳле кăларма çĕнĕрен клеть хушмалла пулса тăнă. Çакăн пек клеть тумалли электрооборудованине ăличчен Харьковра хатĕрленĕ пулнă, халĕ ĕнтĕ «Ленинуголь» трестĕн мастерскойĕсем ăна хăйсемех тăваççĕ.

Нумай производствăсем чĕртавара вырăнтах тупаççĕ. Азербайджанран кантăк завочĕсем валли хăйăр ăличчен Ленинград облаçĕнчен тата Украинăран турттарса тăнă. Халĕ Хурдалан хăйăрĕ инçетрен турттарса килекен хăйăра лайăхах улăштарма пултарни курăнчĕ. Магнитогорск завочĕн доменнăй цехĕ питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан çакнашкал задачăна пурнăçа кĕртет: цех аякран турттарса килекен Чиатур марганец рудине улăштарса, хăй сывăхĕнчи, вырăнти марганец руди çине куçса шырать. Кавказ лешъелĕнчен турттарса килнĕ Чиатур рудине расходласси халех ĕнтĕ икĕ хут чакнă.

Хăйĕн производствине кирлĕ запаслă чаçсем, шĕтĕмпех пулмасан хăшпĕр пайне те пулин, парса тăрайман завод мастерскойĕ çукпа пĕрех. Узбекистанри Сталин ячĕпе тăракан пиравăр комбиначĕ вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах хăйне кирлĕ детальсене хăйĕн вăйĕсемпе тума тытăнчĕ. Акă результатсем: мастерскойсем ĕнтĕ погоналкăсене, бобинсене, катушкăсене, клапансене тата ытти детальсене нумайăрăн туса кăлараççĕ. Шпульсемпе челноксене вырăнтах юсаса хатĕрлеççĕ.

Адыгейăна халиччен трикотаж, çипуç-тумтир таврашĕсене, пукан-сĕтел-сене тата ытти таварсене аякран турттарса килсе тăнă. Халĕ ĕнтĕ трикотажа та, сĕтел-пукансене те, урана тăхăнмалли япаласене те, кондитер таварĕсене те чылайĕшне вырăнтах—Адыгейăрах туса хатĕрлеççĕ.

Продовольстви туса хатĕрлес ĕçре вырăнти майсемпе татах та ытларах усă курма пулать. Краснодар крайĕнчи районсем вырăнти продовольствине хĕллене валли хатĕрлес ĕçе ик-виçĕ хут ӳстереççĕ.

— Государствăна панă кашни ытлашши центнер хăяр, купăста, çĕрулми—тăшмана пыра-пыра çапни пулса тăрать,—теççĕ Чăваш республикинчи Улатăр районĕнчи колхозниксем, хăйсен государство умĕнчи обязательствисене ытлашшипех тултарса пырса.

Анчах продовольстви ресурсĕсем Кубаньре е Чăваш республикинче кăна мар пуян. Çапла, сăмахран, Башкир республики вырăнти чĕртавар тĕлĕшĕнчен чи пуян республикăсенчен пĕри пулса тăрать. Çав пуянлăхсемпе мĕнле те пулин ытлараххăн та туллирехĕн усă курмалла, Башкир республикинчи апат-çимĕç комбиначĕсем ăличчен хатĕрленĕ 40 тонна çырла-çимĕç, 20 тонна кăмпа тата 40 тонна пыл—ку вăл, паллах, питех те сахал-ха.

Пахча-çимĕçсем, çырла-çимĕçсем, кăмпасем пĕр килограмм та аҫаль пĕтмелле мар. Вĕсене консервлама, йӳçĕтме, тăвăрлама, типĕтме кашни районрах, кашни колхозрах май пур. Май пур пулсан—тумалла! Вăрçă вăхăтĕнчи пĕр уйăх хушшинче мирлĕ вăхăтра пĕр-пĕр çулталăк хушшинче тума пултарнинчен ытларах тумалла.

Сĕмĕр тăшман хăй ĕнси çинче пирĕн Хĕрлĕ Çар пырса çапнине, пирĕн тăван çĕршыв вăй-хăвачĕ пыра-пыра çапнине туймаллипех туять. Эпир тăшмана кунран-кун вăйлăрах пыра-пыра çапăпăр. Тăшман совет пурлăхне тутанса кураймĕ. Тăшман вăхăтлăхĕ тытса илнĕ районсенче, ĕçлыннисем, Сталин юлташ чĕнсе каланинче пурнăçа кĕртсе пырса, чĕртаварпа продовольстви резервисене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Фашистсен салтакĕсем çăкăр вырăнне партизансен пульлисене ытларах та ытларах туянса пыраççĕ.

Эпир тăшмана вут-çулăмпа пĕтерсе пырăпăр, унăн резервисене пĕтерсе пырăпăр, унăн чĕрĕ вăйĕсене пĕтерсе пырăпăр. Çакна тума ĕнтĕ пире хамăрăн ресурссене пĕтĕмĕшпех мобилизацилени кирлĕ. Пирĕн лозунг: «Пĕтĕмпех фронт валли, пĕтĕмпех Хĕрлĕ Çара валли, пĕтĕмпех тăшмана çапса аркатакан çĕнтерӳ валли!»

(«Правда», сентябрĕн 2-мĕш).

Пĕр уйăх тăшман тылĕнче*)

Хĕрлĕ Çар командирĕн дневникĕнчен

Эпир кулянса ӳкместпĕр, пирĕн боевой отрядра пурте чĕрĕ, аманнисене шутламасан, пурте сывă теме те юрать. Ури аманнă юлташа пуринчен те хĕн. Эпир ăна пулăштатпăр, кая юлма памастпăр. Эпĕ хамран хам тĕлĕнетĕп: манăн сурансем сыпăннăçем сыпăнса пыраççĕ. Эпир паян туссемпе тепре тĕлпултăмăр. Ун çинчен тĕплĕн каласа парас пулать. Улăхра шурлăх хушшинче утă çулакан сынна куртăмăр. Разведкăна пĕр юлташа ятăмăр. Вăл таврăнчĕ, пире хăй патне чĕнет. Улăхри шурлăхра утă çулнă хресченсен ушкăнĕ пире хирĕç килет.

Чи малтанах пиртен: «Сирĕн çисс килмест-и?» — тесе ыйтаççĕ. Паллă, пирĕн çинес килет!

Пире çăкăр, сало, çăмартасем, сĕт пачĕç. Эпир çинĕ вăхăтра утă çулакансем хăйсем шурлăха тухнă чух хăйсемпе юриех ытлашши апат илсе, ăна иртсе калакан красноармеецсене панă çинчен каласа пачĕç

Эпир лайăх çирĕмĕр. Пире вăрмана, типĕ вырăна илсе кайрĕç. Эпир çак вăхăтра чи малтан сывăрса тăрантăмăр.

Каçхине вырăнти çынсем пире ни мĕçсем çук яла илсе кайрĕç.

Пире пĕтĕм ял тухса илчĕ. Пур енчен те пире сысна какайĕ, сĕт илсе килсе пачĕç. Арçынсемпе çамрăккисем пире ытала-ытала илчĕç, алăсене чăмăртарĕç. Акă вăл Совет халăхĕсен аслă туслăхĕ! Хресченсем хăйсен пурнăçне (пурнăçне çав!) хăрушлăх умне тăратаççĕ, анчах пирĕн боецсене чунтан, тăванла тĕлпулаççĕ вĕсем!

Пинск шурлăхĕсенче пытанса лараканăлти туссем пирĕн ушкăна продуктсем парса çул çине кăларчĕç. Пирĕн çул йывăр пулассине асăрхаттарчĕç. Пĕр кӳлĕ патнелле каймалла, ун патне çитиччен сулахаялла пăрăнмалла, тата пĕр çырма урлă ишсе каймалла.

Çак инçе ял çинчен, тăшман хупăрласа илнĕ вырăнта пурăнакан хамăрăн туссем çинчен мĕн асра юлнисене пурне те çырас килет. Днĕвник фашистсен аллине лекме пултарать. Çавăнпа та эпĕ ял ятне те, унта пурăнакансен—чăн-чăн совет патриочĕсен ячĕсене кăтартмастăп. Анчах эпĕ вĕсене астăватăп, чĕрĕ чух манас çук.

Чăнни чăнах, çак ял сыннисем аллисене лăп тытса лармĕç. Вĕсем паян пире кĕтсе илеççĕ, апат çитереççĕ, çул кăтартаççĕ. Ыран вĕсем фашист офицерне сыхласа тăрса, унăн çамкине пуля яраççĕ. Шурлăхсем те çунма пултараççĕ. Пинск çĕрĕ фашистсен ури айĕнче вутпа тивсе кайĕ-ха!

Эпĕ чĕрĕ юлсан, вăрçă хыççăн хамăрăн туссене тавтума, тăшмана çĕмĕрсе тăхса тунă çĕнтерӳ чысне вĕсемпе пĕрле, стакан эрех ĕçме çак яла килсе курăп. Вăрçă вăхăтĕнчех, нимĕçсене каялла хăвалана чух, тен—манăн çул çак асран кайми ял таврашĕнчен иртĕ!

Июлĕн 13-мĕш.

Каллех йывăр кунсем пуçланчĕç. Шурлăхсем, шурлăхсем—вĕçĕ-хĕррисĕр шурлăхсем. Халĕ çапах та çăмăл. Пирĕмпе пĕрле продуктсем пулни те пире пулăшать.

Эпир малтан халăх пурăнакан пунктсенчен пăрăнса иртеттĕмĕр, халĕ ял сывăхне пырса, унта разведчиксем яратпăр.

Пирĕн çĕнĕ тактика ăнăçлă пулса пырать. Паян пирĕн разведчик лайăх хыпарпа килчĕ—Д. ялĕнче фашистсен салтакĕсем çук.

Нумай пулмасть, кунта нимĕçсем пулнă. Яла çаратнă, нумайĕшне хăйсемпе пĕрле илсе кайнă. Хăйсен пуллине астутарас тесе, вĕсем виçĕ чĕлхепе—вырăс, поляк тата нимĕç чĕхипе пĕлтерӳ хăварнă. Унта çапларах каланă: «Халиччен пулнă вырăс çарĕнз, красноармеецсемпе командирсене çитерме татăкланах юрамасть. Кам çитерет—ăна перçе пăрахатпăр».

Э-э, эсĕ! «Халиччен пулнă çар» тетĕн! Суятăн, фашист! Акă сирĕн çарăр вăрах тăмĕ, унтан «халиччен пулнă» тени кăна тăрса юлĕ. Кун пирки эпĕ иккĕленместĕп.

Нимĕçсем, сехрене хăпартас тесе, çакăн пек пĕлтерӳ çакнă та тухса кайнă. Ку ăнсăртран мар: ку вырăнсенче партизансем тапăна пуçланă.

Пире пĕр çуртра чей ĕçтерчĕç тата лайăх çитерчĕç. Кашнинех пĕр çатма çămарта хăпартса пачĕç, кашни çатминех вунă çămарта янă пулĕ. Нимĕçсен командованийĕ: «вырăссене çитермеллĕ мар»—тесе çырнă приказа кунта пурăнакансем çапла пурнăçа кĕртеççĕ.

Эпир хамăр хуçаран Хĕвеланăç Белоруссири партизансем çинчен пĕлтĕмĕр. Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче пысăк сăмах тухса калани çинчен, вăл вăхăтлăха йышăннă территорисенче партизанла сарлака кĕрешӳ организацилеме халăха чĕнни çинчен пире хамăр хуçа каласа пачĕ.

— Кунта пирĕн партизансем пулма çирĕме яхăн çын хатĕрленеççĕ,—терĕ пирĕн хуçа.—Пемелли çук. Пуçласа яриччен хĕçпăшал кирлĕ, малалла мĕн кирлине эпир хамăрах нимĕçсенчен тăпăлтарса илетпĕр.

Эпир хамăрăн «арсеналран» пĕр наган тата патронсем патăмăр.

— Акă ырă япала, — савăнса ӳкрĕ хуçа. — Эсир шанса тăрăр, сирĕн наганăр хăйĕн çумне ыттисене пуçтарĕ! —Вăл барабанри патронсене каларса алтупанĕ çине хучĕ тата курока шартлаттарчĕ. — Пĕр пуля та ахаль пĕтмĕ. Ку патронсем акмалли вăрлăх пек—тырă тухăçлă пулĕ!

—Сирĕн вăхăтăр ырă пултăр!—терĕм эпĕ. —Эсир вырса илнĕ тырă ахнинчен вунă хут нумай пултăр.

Эпир паннă парне шанчăклă алăсене лекрĕ...

Хуçа, пиртен уйăрăлластăн пулмасăр, пире ăсатрĕ. Вăл «вăрçăн пĕтĕмĕшле курсне» илесшĕнччĕ. Эпĕ горючи тултарнă бутылкăсем çинчен каласа патăм, танка кĕççепе витсе, унăн çурăкĕсене питĕрсе, тăшман экипажĕн çапăçу пултарулăхне пĕтерни çинчен каларăм.

Инструктаж ик енчен те пулса иртрĕ. Пирĕн хуçа пĕлсе тăракан çын пулчĕ: пире кайма хăрушах мар маршрут туса пачĕ, эпир ăна пăхăнса каятпăр ĕнтĕ.

Июлĕн 14-мĕш.

Эпир çул çинче мĕн-мĕн курни çинчен пĕр-пĕринпе калаçатпăр. Сӳпĕлти Геббельс фашистсем йышăннă районсем çинчен янтăраса илчĕ пулĕ. Вĕсем çапăçса илнĕ «пурнăç пространствинче» эпир пыратпăр, анчах нимĕçсене курмастпăр.

Гитлерăн воякĕсем ăçта çӳреççĕ? Эпир тĕлпулнă хресченсем чугунçуланчен тата шоссерен нимĕçсем пăрăнса каймa хăрани çинчен каласа парааççĕ. Пăрăнса каяс пулсан та, пысăк отрядпа тухаççĕ, ун чухне çаратма та мародерсем шутлма кăна тухаççĕ. Нимĕçсене курмастпăр, ĕçлекен ялсовечĕсене, партине комсомол организацисене тĕлпулатпăр. Пурте вĕсем тăшман тылĕнче! Акă паян Д. ялĕнчи чи малтан тĕлпулнă çын комсомол организацин секретарĕ пулчĕ.

Вăл партипе комсомолăн пĕрлешӳллĕ пухăвĕнчен таврăнатчĕ. Партиецсемпе комсомолецсем çĕрле хытă питĕрсе хунă пӳртре çуртасем тĕксĕм çуннă вырăнта пухăннă. Вĕсем тăвас пирки сӳтсе-явнă, партизан отрядĕнче 12 çын, унта тата 28 çынна илес пирки калаçнă. Кашни кандидатурăна тĕплĕн сӳтсе-явнă.

Мĕнле пулса иртет! Эпир наган парса хĕçпăаллантарнă отрядăн пуçламĕшне хуртăмăр. Паян отрядра 40 йĕкĕт.

—Пирĕн хĕçпăшал çитмест. Анчах эпир ăна тупатпăр,—тет комсомолец, айăпа лекнĕ пек пулса.

Тăшманран туртса илсе хĕçпăалланасси кунти вырăнсенче пĕтĕмĕшлĕ «установка» пулса тăрать пулас. Ку тĕрĕс те!

Пире пĕр пӳрте чĕнчĕç. Тата партизансем те килчĕç. Йĕкĕтсем çамрăк, комсомолецсем.

Эпĕ танкист иккенне пĕлсен, нимĕç танкĕсем çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕç. Эпĕ вĕсене пĕр-пĕтĕм лекци вуласа патăм. Мана хут илсе килсе пачĕç. Эпĕ нимĕçсен паллăрах танкĕсен силуэтĕсене ӳкерсе патăм, сиенлĕнме ытларах май пур вырăнсене кăтартрăм, горючи тултарнă бутылкăсем çинчен тата танксен истребителĕсем мĕнле ĕçлесси çинчен каласа патăм.

Эпир ку ялта хамăр хĕçпăаллапа боеприпассем пĕр пайне парса хăвартăмăр. Вĕсем пурте ĕçе каяссине пĕлни питĕ кăмăллă.

Хăрушлăх ан пултăр тесе, пире сывăхри утара ячĕç. Партизансем пире валли темиçе чăх ăшаласа пачĕç.

Чи лайăххи çакă: эпир нумай кунсем ирттернĕ хыççăн чи малтан пӳртсенче сывăртăмăр. Пирĕн ыйăха хĕçпăаллă партизансем сыхласа тăчĕç.

Июлĕн 15-мĕш.

Шурлăхсенче вăрттăн сукмаксем пур, вĕсене вырăнта пурăнакансем çеç пĕлеççĕ.

Пире çул кăтартса параканăлти партизан çапла каласа пачĕ:

— Эпир пĕрлешме тин кăна тытăнтăмăр. Пирĕн партизансем—новобранецсем çеç. Т. ялĕнче эсир чăн-чăн боецсене куратăр. Унти йĕкĕтсем маларах организацилеменĕç.

Чăнах та, эпир Т. ялĕнче тăшманпа хирĕç пулса курнă отряда куртăмăр. Партизансем пурте мар вырăнтаччĕ: хăшпĕрисем колхоз председателĕпе пĕрле тăшман радиостанцине пĕтерме тата кĕпере çĕмĕрме кайнă.

Эпир пĕр юлташран отряд камран тăни тата вăл мĕн тума хатĕрленни çинчен ыйтса пĕлтĕмĕр. Отрядра ĕлĕкхи партизансем, граждан вăрçинче пулнисем те пур иккен. Вĕсем отрядра кăтартса пыраççĕ, унăн тактикине палăртаççĕ.

Вырăнти партизансем мĕн тума шухăшланине ырламаллипех кăна юлчĕ: вĕсем ăслăн, урă шуçпа тата çав вăхăтрах хăюллăн тапăнма хатĕрленнĕ. Пĕтĕм ял вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлени пире питех те кăмăла кайрĕ: выльăхсене инçетри вăрмана илсе кайса пытарнă, нимĕç мародерĕсем талăнас пулсан, хуçалăха çавăнтах пĕтĕмпех пĕтерме палăртса хунă. Кунта нимĕçсем валли нимĕн те, пĕр тĕпренчĕк те тăрса юлмĕ! Вĕсем валли вара вĕри тăхлан çителĕклех пулать.

Эпир практикăллă ханашсем панине юлташсем питĕ тимлесе итлерĕç.

Ытлашши çынсен куçĕсен умне лектерес мар тесе, пире вăрттăн вырăна илсе кайрĕç, унта колхоз кĕтӳне пытарнă, вĕсене партизансем сыхласа тăраççĕ. Ячĕ пултăр тесе яла пĕр мăшăр иккен ĕне кăна хăварнă.

Колхоз председателĕн заместителĕ ĕненмелле çапла каласа парать:

— Эпир колхозпа пурăннă, колхозпах пурăнатпăр! Акă пирĕн колхоз пурлăхĕ,—терĕ вăл çурăк çисе çӳрекен ĕнесем çине кăтартса.—Кунта нимĕç килеймест. Пирĕн выльăха тивме хăять пулсан, кашни пĕр ĕнешĕн хăйĕн вунă карланкине пĕтерĕ.

Акă мĕн пулса тухать иккен! Нимĕçсен тылĕнче—совет колхозĕ, партизанла отряд! Эпир Пинск шурлăхĕ çинче иртнĕ кунсенче халăх хускалма ĕлкĕрнĕ иккен. Пинск шурлăхне кĕме пире старик-белорусс çул кăтартнăранпа партизансен хумĕ вăл яла пырса çитнĕ пулĕ. Пур çĕрте те Сталин юлташ чĕнсе калани илтĕнет.

Юлашки çитес номерте пулать.

*) Малалли. Пуçламĕшĕ «Чăваш Коммунин» 211-мĕш номерĕнче.

Гитлеризма хирĕç кĕрешме пĕрлешӳллĕ вăйсемпе тухар

ВЦСПС секретарĕпе Н. М. Шверник юлташпа калаçни

Англири тред-юнионсен конгресĕ англичансемпе вырăссен профсоюз комитетне тăвасси пирки решени йышăннипе çыхăнчен пичетре пĕлтернисене май, ВЦСПС секретарĕ Н. М. Шверник юлташ ТАСС корреспондентне çапла пĕлтернĕ:

«Англири тред-юнионсен конгресĕ англичансемпе вырăссен профсоюз комитетне тăвасси çинчен йышăннă решение, паллах, Совет Союзĕнчи рабочи класс тата мĕншăн ĕçсыннисем ырлăç.

Англичансемпе вырăссен профсоюз комитетне туни—гитлеризма хирĕç кĕрешме вăйсемпе средствăсене мобилизацилес тĕлĕшпе пĕрле практикăллă ĕçсем туса ирттерме ССР Союзĕнчи тата Англири профсоюз организацийĕсемпе рабочи класс хушшинче тачă тата ĕçлĕ сыхăну йĕркелесе яма май парĕ.

Тред-юнионсен конгресĕ тата Англири профсоюз движенийĕн руководителĕсем совет халăхне вăл гитлерла Германие хирĕç туса пыракан геройла кĕрешӳре кирлĕ пулăшăва пама Англири рабочи класс татăклăн хатĕр тăрăл тесе каланисене илес пулсан, çавăн пек каланисем вара Совет Союзĕнчи рабочи класăн тата ĕççыннисен кăмăлне савăнтарма çеç пултараççĕ. Çак пулăшăва эпĕ, немĕçсен тĕп вăйĕсене хĕвелтухăçне илсе килнипе тата Англине Гитлерла бандăсем утравсем çине тапăнса кĕрессинчен тата немĕç самолечĕсем Лондон çине бомбăсем пырса пăрахассинчен çăлнипе Совет Союзĕ Англие пана тата халĕ те паракан пысăк пулăшу çине ответлени пулать, тесе шутлатăп.

Англири тред-юнионсен конгресĕ англичансемпе вырăссен профсоюз комитетне тăвасси çинчен пана сĕнĕве илсенех ВЦСПС ăна çийĕнчех сӳтсе-явĕ, хăй енчен çав комитета хăвăртрах организацилес, çавăн пекех ăна ăнăçлă ĕçлесе пымалла тăвас тĕлĕшпе вăй çатнĕ таран пурне те тăвĕ».

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англи авиацийĕн министерстви каларнă коммюникене парать, унта çапла каланă: сентябрĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противникăн самолечĕсем Кăнтăр-Хĕвеланăç тата Хĕвелтухăç Англи çине пырса тухнă. Çĕршывăн кăнтăр-хĕвеланăç енне пăрахнă бомбăсем палăрмаллах сиен тунă. Жертвăсем пысăках мар.

Англи авиацийĕ сентябрĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Рур çине вĕçсе кайса тапăннă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви авиаци министерстви коммюникине парать, унта çапла каланă: сентябрĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Гюльсери (Рейн облаçĕ) синтетически каучук тăвакан пысăк завод çине пырса тапăннă. Çанталăк лайăх тăни Англи самолечĕсен ĕçĕсене пулăшнă. Чылай взрывсем пулнине палăртнă. Чугунçуллсем çине те, Хĕвеланăç Германи-ри ытти промышленноçлă предприятисем çине те бомбăсем пăрахнă.

Сыранри оборона самолечĕсем иртнĕ каçхине Норвегин Бергсе порине атакăланă. Пулă çăвĕ тăвакан завод çине бомбăсем тĕл лекнĕ, унта пушар тухнă. Çак операцисенчен хăйсен базисене 8 бомбардировщик каялла тавăрнаман. Сентябрĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле хăйĕн базине тавăрăнман бомбардировщик экипажне çăлса хăварнă.

ЛОНДОН, сентябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Англин тинĕс министрĕ Александер пĕлтернĕ тăрăх, Германи оккупациленĕ çĕршывсен суту-илӳ суднисен мĕнпур тоннажĕнчен,—пурĕ вĕсем 13 миллион тонна шутланаççĕ,—çурри ытларах хисепĕпе англичансем Атлантикăшăн пыракан çапăçура усă кураççĕ. Немĕçсем хăйсем туртса илнĕ портсемпе тата суднăсемпе пĕлсе усă курма пултараймарĕç. Норвегин çурçĕр сыранĕсенчен пуçласа Сицилине çитиччен Англин самолечĕсем тата çар карапĕсем тĕнĕл çĕршывĕсен суту-илӳ флочĕн базисене пĕрмаях атакăлаççĕ. Противникăн тинĕсри судоходстви пĕтĕм тоннаж енчен илсен Англирен ытларах сиен курать.

Вăрçăччен Германин хăйĕн суту-илӳ флочĕн водоизмещенийĕ 4,5 миллион тонна пулнă. Оккупациленĕ çĕршывсен тата Италин суту-илӳ флочĕпе пĕрле Германин пĕтĕм тоннажĕ 14 миллион тонна шутланнă. Водоизмещени 4 миллион тонна шутланакан суднăсене тытса илнĕ е путарнă. Çапла вара, тĕнĕл çĕршывĕсем хăйсен мĕнпур тоннажĕнчен икĕ çиччĕмĕш пайне çухатнă, вĕсенчен чылайăш пайне Англин суту-илӳ флотне пĕрлештернĕ.

Англин информаци министерстви кăтартса панă тăрăх, Лондонри авторитетлă çынсем хушшинче август уйăхĕнче çапăçу итогĕсем июль уйăхĕнчиген лайăхрах пулнă, тесе пĕлтереççĕ. Уйрăмах, суту-илӳ суднисене сыхлама корветсемпе лайăхрах усă курнă. Çавнашкалах Вăтаçĕр тинĕсĕнче Италин судоходствине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнӳсем тунă.

Англи подводнăй лодкисен Вăтаçĕр тинĕсĕнчи ĕçĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англин тинĕс-çар министерстви çакăн çинчен калакан коммюнике пичетлесе кăларнă: Вăтаçĕр тинĕсĕн варринче Тарантопа Бенгази хушшинче Англин подводнăй лодки противникăн кăнтăралла каякан карапĕсен караванĕ çине ăнăçлăн пырса тапăннă. «Рамб» класĕнче тăракан 4 пин тоннăна яхăн тоннажлă, 18,5 узела çити хăвăртлăхпа кайма пултракан карапа торпеда ярса путарнă.

Германин подводнăй лодки „Грир“ эсминец çине тапăннă пирки

СТОКОЛЬМ, сентябрĕн 6-мĕш.(ТАСС). Германири информаци бюровĕ Америкăн «Грир» эсминецĕ çине тапăнни пирки Германин официальнăй йĕркепе суйнине панă.

Пĕлтерӳре çапла кăтартса панă: сентябрĕн 4-мĕшĕнче 12 сехет те 30 минутăра Германин подводнăй лодки Америка эсминецĕ çине икĕ торпеда кăларса янă. Пĕлтерӳрен çакă уççăн курăнать: Америкăн çар карапĕ çине çавăн пек провокацилле тапăннине Германи сыннисем: çак инцидент «Германи блокадин зонинче» пулнă тата «Грир» эсминец Германин подводнăй лодки çине шыв айне пăрахмалли бомбăсемпе хăй малтан атакăланă, тесе тӳрре кăларма хăтланаççĕ.

Германи пĕлтерĕвĕнче США адресĕпе усал сăмахсем каласа вăрнă тата США президентне Рузвельта «США-на Германине хирĕç вăрçа туртса кĕртме» тăрăшать тесе провокацилле айăпланă.

Кунти çынсем Германин çак пĕлтерĕвне Германире ертсе пыракан çынсем нейтральнăй çĕршывăн карапĕ çине пиратла тапăннишĕн айăпа хăйсем çинчен сирсе яма ăнăçсăрран хăтланни пулать, тесе хаклаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтерĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар министерстви Германи подводнăй лодки Америкăн «Грир» ятлă эсминецĕ çине пырса тапăннă пирки çакăн пек заявлени тунă: «Подводнăй лодкăпа тĕл пулнă чухне «Грир» чи малтан хăй пырса тапăнаканĕ пулнă, тесе, немĕçсен паян тухнă пиченчĕ çирĕплетесе пама пăхать пулин те, фактсем тинĕс-çар министерстви каланинех тӳрре кăлараççĕ, чăннипех те тинĕсри çак тĕлпулура подводнăй лодка «Грир» эсминец çине чи малтан пырса тапăннă. Унччен мар, çавăн чухне кăна «Грир» лодкăна контратака тунă.

Франципе антифашистсене вĕлереççĕ тата тĕрмене хупаççĕ

БЕРН, сентябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Кунта килнĕ сведенисем тăрăх, Виши правительстви антифашистсене массăллăн вĕлерме тата тĕрмене хупма халĕ те чарăнмасть. Юлашки кунсенче кăна Парижри çар трибуналĕ вĕлермелле туса 3 приговор, пĕтĕмпе шутласан 129 çуллăха каторгăна ямa 12 приговор тата пĕтĕмпе шутласан 50 çуллăха тĕрмене хупма 15 приговор йышăннă. Вĕлермелле суд тунисене приговорсем йышăнсан, тепĕр кунпех пуçĕсене гильотинăпа касса татнă.

Пуатьери специальнăй трибунал Друо француза «правительствăна хирĕç ĕçлесе пынă» тесе айăпласа, вичĕ çуллăха тĕрмене хупма, тĕрмерен тухсан 10 çул хушши политикăллă тата граждăнла правăсем памалла мар туса приговор йышăннă. Дижонра çар трибуналĕн специальнăй секцийĕ концентрацилле лагерьтен тарнăшăн пĕр антифашиста 7 çул каторгăра ĕçлеттермелле суд тунă. Ытти икĕ антифашиста чиккер çуллăха тĕрмене хупмалла тунă. Çак судах фашизма хирĕçле ĕçсемшĕн пĕр рабочине вĕлермелле туса приговор йышăннă.

Парижри специальнăй çар суччĕ Камиль Картье ятлă хĕрарăма листовкăсем сарнăшăн штраф тӳлеттермелле тата 4 çуллăха тĕрмене хупмалла тунă. Жанна Делиба ятлă тепĕр хĕрарăма фашизма хирĕç пропаганда тунăшăн 15 çуллăха каторгăна ямалла тунă.

Ганна хулинчи (Алье департаменчĕ) çар трибуналĕ колонисенчи войскăсенче врач пулса ĕçлекен Сис ятлă çынна персе вĕлермелле туса заочнăй йĕркепе приговор йышăннă, ăна «Франции пĕрлĕхне тата хăрушăсăрлăхне хирĕç преступленисем тунă» тесе айăпланă.

Болгари парламенчĕн чрезвычайнăй сессийĕнче

АФИНЫ, сентябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Сентябрĕн 3-мĕшĕнче Болгари парламенчĕн чрезвычайнăй сессийĕ уçăлнă. Сесси кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту — «Государствăна хӳтлесси» çинчен кăларнă закон çумне хушусем кĕртесси çинчен. Çав хушусенче саботаж тунăшăн, Болгари «союзникĕсене» хирĕç тăнăшăн тата ытти «государствăллă преступленисемшĕн» айăпа кĕнĕ çынсене те çакăн пек наказанисем памалла. Призыв йĕркипе çара чĕнекенсем сборнăй пунктсене пымасăр тăрасси час-часах пулса пыма пуçланă пирки, Митаков çар службинчен пăрăнаканĕсене нумай суллăха тĕрмене хупса лартма ыйтнă. Листовкăсем, воззванисем, лозунгсем сарнăшăн тата çуртсен стенисем çине сăмахсем çырнăшăн айăпланисене 10 суллăха тĕрмене хупса лартмалла, уйрăм тĕлсенче — персе вĕлермелле. Митаков çапла палăртнă: «уйрăм тĕлсенче» тенине Болгарипе «союзниксем» хупшинчи, урăхла каласан, Болгарипе Германи тата Болгарипе Итали хушшинчи отношенисене япăхлатма пултаракан кирек мĕнле ĕçсене те ăнланас пулать.

Митаков сĕнĕвĕ тăрăх, çӳлте асăннă преступленисем пирки пуçарнă мĕнпур ĕçсене çийĕнчех пăхса тухмалла, персе вĕлересси çинчен йышăннă приговорсене вара суд решенийĕ тăрăх халăх умĕнче пурнăçа кĕртме пултараççĕ.

Болгари хресченĕсем оккупантсене тырă парасшăн мар

АФИНЫ, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Софирен çапла пĕлтереççĕ: Болгарин нумай районĕсенчи хресченсем хушшинче вăйлă хумханусем пулса иртнĕ. Çак хумханусем правительство «ытлашши юлакан тырă» текен тырăна вăйпа туртса илме распоряжени панă пирки пулса иртеççĕ, çак распоряжени тăрăх хресченсен мĕнпур тыррине нимĕн хăвармасăр çăптăрса илсе, ăна Германине илсе каяççĕ.

Болгари пичечĕ правительство приказне пурнăçа кĕртессишĕн вăйлă агитаци туса пырать, хатĕрленнĕ тырă урăх çĕре каймасть, çĕршывăн шалти нушисем валли каять, тесе пĕлтерет. Анчах çак пропагандăна хресченсем ĕненмеççĕ тата тырă памаççĕ. Хресченсем хирĕç тăни правительствăри çынсене хăратса ӳкернĕ. Çак ыйтăва сентябрĕн 3-мĕшĕнче парламент депутачĕсен правительство ларăвĕнче сӳтсе-явнă, тесе пĕлтереççĕ.

«Ытлашши юлакан тырра» парасси çинчен правительство каларнă приказа хирĕç саботаж тунăшăн хăшпĕр уездсенче хресченсене массăллăн арестлеме пуçланă.

Иран хаçачĕ Берлинри радио суйнине тăрă шыв çине кăларать

ТЕГЕРАН, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Журналь де Тегеран» ятлă хаçат Берлинри радиостанци Перси чĕлхипе провокацилле пĕлтерӳсем сарни пирки умстатья пичетлесе кăларнă.

Берлинри радио Иранри лару-тăру çинчен суя пĕлтерӳсем парать, тесе çырать хаçат. Сăмахран, Берлинри радио çапла пĕлтернĕ: Тегеранăн çурçĕр-хĕвеланăç пайне бомбăсем пăрахнă имĕш, çав вăхăтра арçынсемпе хĕрарăмсем хушшинче вилнисем çĕршер çын шутланаççĕ пулать. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Тегеран çине нимĕнле бомбăсем те пăрахни пулман, ăна Тегеранри пĕтĕм халăх çирĕплетме пултарать. Шах Тегеранран Исфахана тухса кайнă тесе Берлинри радио суя хыпăр сарнине те хаçат тĕрĕс мар тесе пĕлтерет. Пуçран шухăшласа кăларнă çак нашкал суя хыпарсене эпир малашне тӳсме пултараймастпăр, тесе çырать хаçат.

Германи фашисчĕсем Франципи памятниксене пĕтереççĕ

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 6-мĕш. (ТАСС) «Стокгольмс тиднинген» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Франципи изящнăй искусствăсен министерстви Парижри площадьсенчен пĕринче тăракан Гамбетт статуйине пăсма ирĕк панă. Статуйăпа, тесе мăшкăлласа çырать Эссенри «Национальпейтунг» хаçат, «тата усăллăрах ĕçре» усă курмалла пулать. Çавăн пекех Парижри тата ытти чылай памятниксене куçарасси çинчен пĕлтернĕ. Франци деятелĕсен пăхăртăн тунă мĕнпур бюстчĕсене тимĕр-тăмăр вырăнне памалла.



Нимĕç фашисчĕсем Польшăна оккупацилесе, ăна категорăллă тĕрме туса хунă, миллионшар ачасене вĕлере-вĕлере пĕтернĕ, юлнисем вара выçлăхра тата чуралăхра пурăнаççĕ. Ирĕксĕр ĕçлеттерни халăха халран ярать. Гитлеровецсем ачасене те çавтери йывăр ĕçре ĕçлеттереççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Варшава хулинчи ачасем фашистла полици сăнаса тăнипе урам шăлса тасатаççĕ.

«Пост Меридием» хаçатран илнĕ репродукци (ТАСС фотохроники).

Америка корреспонденчĕ Германин шалти йывăрлăхĕсем çинчен

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Григг Берлинран статья панă, статья «Вăрçăн виççĕмĕш çулĕ умĕнче» ятлă.

Григг çапла çырать: Германи халăхĕн вăрçă—çутăсене тăтăшах сӳнторнине, продуктсене нормăпа панине, хваттерсене хутманнине, вилнисен вăрăм списокĕсене хаçатсенче пичетлесе пынине, Англи самолечĕсем час-часах пырса тапăннине тата 30 миллиард маркăллă налога пĕлтерет. Халăх асап курнине, унăн пурнăçĕнче чи кирлисем те çуккине кăтартса пама автор çакнашкал фактсем илсе кăтартать: сехет тӳрлеттерме 3 уйăх кирлĕ, костюма химилле тасатма çур çул кирлĕ. Çĕнĕ костюм çĕлеттерме панă заказа пĕр çултан тата унтан та ытларах вăхăтран тин туса параççĕ. Вăрçăн виççĕмĕш çулĕн пуçламĕшĕнче Германи власĕсем чи йывăр задача—90 миллион немĕçе валли кирек мĕнле пулсан та продовольстви тупас задача умĕнче тăраççĕ. Оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсене çимĕç парас ĕç питĕ çивĕчĕн тăрать, сăмахран, Бельгие е Голландие чи хăрушă выçлăх кĕтет. Кун пек ситуаци иртнĕ хĕллех пулнăччĕ ĕнтĕ. Кăçалхи хĕлле продовольстви ыйтăвĕ татах та хытăрах йывăрланать.

Григг çакна кăтартса пырать: Англи авиацийĕ 16 уйăх хушши çĕрле пырапыра тапăнни Германин нумай хулисенче хăрушă йĕрсем хăварнă. Сурçĕр Германири тата Рейн облаçĕнчи хуласенче тунă сиенсене тӳрлетсе çитерме май килмест. Шкул ачисемпе вĕсен амăшĕсене хăрушăрах районсенчен Баварине, Австрине, Судет облаçне, Хĕвелтухăç Пруссине, Богемине тата Словакине куçарма иртнĕ çултах пуçланă. Юлашки вăхăтра халăха урăх çĕре куçарасси ĕлĕкхинчен хытăрах пырать, мĕншĕн тесен сывлăшран пырса тапăнасси кĕркунне хытăрах пуласса кĕтеççĕ.

Германин çар машини Хĕвелтухăçĕнчи кĕрешӳпе сыхăннă, çак вăрçа вырăссен хаяр хĕлĕнче туса пымалла. Вăрçă ĕçĕсем пĕр фронтра кăна мар пыраççĕ, анчах Атлантикăшăн пыракан вăрçăн вĕçĕ курăнмасть-ха. Кун çумне тата тепĕр уйăту пырса хутшăнать: Пĕрлешӳллĕ Штатсем вăрçа кĕмĕçши?—тесе кашни немĕçех хăйĕнчен хăй ыйтать.

ОККУПАЦИЛЕНĔ ПОЛЬШĂРА

Ютçĕршыв журналисчĕсенчен пĕри, гитлеровецсем оккупациленĕ Польшăна нумай пулмасть кайса килнĕскер, хăй Познань хулинче курса илтнисем çинчен каласа панă. Немĕçсем Познаньре Польша ялĕсене çунтарса яраççĕ, поляксен çĕрĕсене туртса илсе Германи помещикĕсене параççĕ. Польша хресченĕсене питĕ нумайăн Германие ялхуçалăх ĕçĕсене ĕçлеме ирĕксĕрлесе илсе каяççĕ.

Познаньре пурăнакан çынсенчен нумайĕшĕсем полякла калаçаççĕ пулсан та, поляк чĕлхине кунта чарнă. Поляксен немĕç магазинĕсене кĕме право çук, вĕсен хулан центральнăй урамĕсенчи тротуарсем çине тухма юрамасть.

Польша халăхĕ выçă пурăнать. Поляксем каласа панă тăрăх, вĕсем Познань хулине гитлеровецсем килсе кĕнĕ вăхăтранпа шурă çăкăр çисе курман. Поляксем аш-какай мĕн тути каланине те манса кайнă ĕнтĕ. Выçăпа аптăраса вилесси кулленхи явлени пулса тăнă. Куллен çимесĕр пурăнса аптăраса çитнĕ поляксем немĕçсен продовольстви магазинĕсем çине пĕр хутчен мар пыра-пыра тапăннă. Çакăн çинчен Германи пичечĕ хăй те пĕлтерет. Çапла, сăмахран, нумай пулмасть «Остдейчер беобахтер» хаçат Польша хĕрарăмне пĕрине, немĕçсен Леслаури (Познань районĕ) апат-çимĕç магазинне тапăнма поляксен 28 хĕрарăмне организацилĕскерне, суд туни çинчен пĕлтернĕ. Çак хĕрарăма суд вĕлермелле приговор йышăннă.

Польша культурине тискер-кайăкла пĕтерсе пыраççĕ. Польшăн Познаньри мĕнпур шкулĕсене тата театрĕсене хупнă.

Познаньре пурăнакан çынсем çакăн пек положенине килĕшмеççĕ. Польша партизанĕсем оккупантсене канăç памаççĕ. Немĕçсен хĕвелтухăç Польшăра туртса тăракан хаçачĕсем хăйсем те тĕрлĕ районсенче Польшăн хĕçпăшаллă отрячĕсем ĕçлени çинчен калакан пĕлтерӳсене курăнмалла вырăнсенче часчасах пичетлеççĕ. (ТАСС).

Германи халăхĕ кăмăлсăрланма тата кулянма пуçланă

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Германи пичечĕ Германири халăхсем хушшинчи начар шухăш-кăмăлсене тата халăх тарăхса çитнине ытларах пултараймасть.

Немĕçсен оккупациллĕ власĕсем Бельгире кăларса тăракан «Брюсселер цейтунг» хаçат хăйĕн корреспонденчĕ Берлинран пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерӳре Германи халăхĕн начар шухăш-кăмăлĕсем çинчен каланă. Уйрăм çĕнтерӳсем тунă çинчен пĕлтернисем, тесе çырать корреспондент, халăха хавхалантарма пултарайманнине, немĕç халăхĕ кăмăлсăрланать. Вăрçă вăраха кайнăшăн, лавкасем патĕнчи черетсем пулнишĕн шăртланаççĕ, пахча-çимĕçсем сутакан торговеца пахча-çимĕçсем çуккишĕн ятлаçаççĕ. Немĕçсем хăшпĕр çынсем вăрçа пула пуйăнăшăн тарăхаççĕ. Паллах, Германири кулленхи пурнăç çакăн пек шухăшкăмăлсем патне илсе пырать. Кунсăр пуçне немĕçсен кашни кунах пиншер салтакĕсем вилни Германи халăхне шухăшлаттарать.

СТАМБУЛ, сентябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Швейцарири «Газетт де Лозанн» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, хĕвелтухăçĕнчи вăрçăн йывăр условийĕсем немĕç салтакĕсене деморализацилеççĕ. Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă, тесе каласа параççĕ корреспондента Берлина пынă аманнă салтаксем, йăлтах расна йышши вăрçă. Çапăçусем халиччен курман пек хаяр пулса иртеççĕ. Аманнă красноармеецсем те пеме чарăнмасçĕ. Çынсем кăна мар, вырăс çут-çанталăкĕ те пирĕн çине тăшманла пăхаççĕ.

Корреспондент çапла палăртать: Берлинра шухăш-кăмăлсем питех те начар. Хаçатсем траурлă пĕлтерӳсемпе тулса ларнă, вĕсенчен нумайĕшĕсем «Пирĕн пĕртен пĕр ывăл» тесе пуçланаççĕ.

Греципи нимĕçсемпе итальянецсем хушшинче хирĕçӳсем ӳссе пыни çинчен пĕлтереççĕ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 7-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин корреспонденчĕ Цюрихран пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулинчен килекен çынсем Греципи нимĕçсемпе итальянецсем хушшинче хирĕçӳсем ӳссе пыни çинчен пĕлтереççĕ. Вĕсем çапла каласа параççĕ: нумаях пулмасть Пирей гаванне кĕрекен Италин пĕр пароходне Германин патрульнăй бомбардировщикĕ шыва путарнă. Немĕçсем пароход тĕрĕс мар сигналсем панă тесе ăнлантарса панă, пароход патне Германи летчикне Итали власĕсен алли паман. Хăшпĕр нацистсен сăмахĕсем тăрăх, çакăн пек бомбăсем пăрахни Итали офицерĕсем çилленсе тавăрни пулнă, унччен пĕр кафере Итали офицерĕсем çапăçса кайса, немĕçсен пĕр летчикне аманнă пулнă. Çав нацистсемех тата çакна кăтартса параççĕ: Муссолинирен мăшкăласа немĕçсем юрă хывнă, итальянецсем урампа иртсе пынă чухне Греци ачисене çав юрра юрлаттараççĕ.

Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулнине кăтартса паракан движени

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Пичет пĕлтернĕ тăрăх, Литван 18.000 члена пĕрлештерсе тăракан виçĕ организацийĕ США-ра «Совет Союзне медицина енĕпе пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет» тунă. Пĕтĕм çĕршывра халĕ çĕре яхăн массăллă митингсем пулса иртнĕ.

Америкăра пурăнакан вырăссем чылай штатсенче Хĕрлĕ Çар валли улăпин доллар ытларах пухнă.

Канадăра Совет Союзĕпе дипломатиллĕ тата коммерциллĕ çыхăнăва йĕркелесе ярассишĕн движени сарăлса пырать. Нумай йышлă организацисем фашистла агрессине хирĕç кĕрешме Совет Союзне хăвăртрах пур майсемпе те пулăшма ыйтаççĕ.

Сербири терорр

ЛОНДОН, сентябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Белградри радио Германи командованийĕ хула урамĕнче паллă мар çын Германин пĕр салтакне вĕлернĕшĕн сентябрĕн 3-мĕшĕнче çĕрле Белградра 50 серба персе пăрахни çинчен официаллă йĕркепе пĕлтернĕ.

Сербире партизанла движени вăйланса пыни Германи оккупанчĕсене тарăхтарать. Вĕсем террора татах вăйлатассипе хăратаççĕ. Германин Белградра тухса тăракан «Донау цейтунг» хаçачĕ Германи комиссарĕ Турнер заявленине пичетлесе кăларнă. Вăл хăйĕн заявленийĕнче пăлханакансене хирĕç карательнăй кампани пуçланни çинчен пĕлтернĕ. Заявленинче çапла каланă: «Германин оккупацийлĕ çарĕн халĕ пуçласа хăйĕн ĕçне тумалла пулать. Партизансене пĕр наказани—вилĕм пулать».

Венгрин генеральный штаб начальникĕ отставкăна тухнă

БЕРН, сентябрĕн 6-мĕш. (ТАСС). Будапештра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, регент Хорти Верта генерала Венгри çарĕн генеральнăй штаб начальникĕн обязанноçĕсенчен хăларнă. Отставкăн сăлтавне Вертан «сывлăхĕ начар» тесе ăнлантарса панă.

Анчах та выранти журналистсем хушшинче калаçа тăрăх, Вертана нимĕçсем ыйтнипе отставкăна кăларнă.

Тимĕр-тăмăр пухаççĕ

КАНАШ. Анаткас Уçырма ялсоветне кĕрекен колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем, шкул ачисем 1650 килограмм тимĕр-тăмăр пухнă. Вăл шутран Буденный ячĕпе тăракан колхозра 200 килограмм, «Ударник» колхозра—550 килограмм, «Комбайн» колхозра 900 килограмм пухса панă. Тимĕр-тăмăр пухас ĕçре уйрăмăнах Кузьмин Иван, Петров Валерий, Семенов Василий, Никифоров Константин, Кириллов Григорий, Романов Петр юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç.

А. ИВАНОВА.

СĔНТĔР. Кӳрекаври «Наука» колхозри пионерсемпе шкул ачисем тимĕр-тăмăр пухас ĕçе лайăх организацилерĕç. Иртнĕ кунсенче Витя Русаков, Миша Григорьев пионерсем тимĕр-тăмăр пухса, сельпо урлă государствăна 320 килограмм пачĕç.

Тимĕр-тăмăр пухас ĕç районра сарăлсах пырать.

С. НАЛИМОВ.

ÇĔРПУ. «Планета» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем, шкул ачисем тăван çĕршыва валли 16 шăт тимĕр-тăмăр пухса. Михайловка станцине кайса лесрĕç.

Пушанарти комсомолецсемпе пионерсем те тимĕр-тăмăр пухаççĕ.

А. Г.

Çимĕç пахчин тулашĕ

Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз 7 гектар çинче сад ӳстерет. Унта 240 тĕп улмуççи лартнă. Кунсăр пуçне тата çырла йывăççисем те нумай ӳсеççĕ. Колхоз кăçал 9332 тенкĕлĕх çырла сутнă. Çак лаптăк çинчех пахча-çимĕçсем те йышлă лартса тăваççĕ. Çулсеренех колхоз 5—6 тонна хăяр, купăста, помидор, кишĕр, сухан туса илет. Кăçал та хăяр сутса пин тенкĕ тыла тупăш илнĕ.

М. ЗАХАРОВ.

Натуроплата тырри парса татнă

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Чылай колхозсем çуртри вырăсла пĕтерчĕç. «Красный Октябрь», Шмидт ячĕпе тăракан колхозсем кĕлтесене те капана хывса пĕтереççĕ. Шмидт ячĕпе тăракан колхоз государствăна 250 центнер тырă леçсе пачĕ. «Искра» колхоз натуроплата тыррине те парса татнă.

Н. ВИНОГРАДОВ.

Ответлă редакторăн обязанноçĕсене туса пыракан С. К. КОНСТАНТИНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5561

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 448. Ф. б. 98. 84 п. л.